чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă



СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

# ХЫПАР



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

16/26422/№ | Юн кун, 2014, кăрлач (январь), 29 | Хакĕ ирĕклĕ | WWW.hypar.ru

## Программăна пурнăçа кĕртнĕ

***Кăрлачăн 28-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Пĕтĕм Раççейри селектор канашлăвне хутшăннă. Унта граждансене ишĕлме пултаракан пурăнмалли çурт-йĕр фондĕнчен куçармалли программăсене пурнăçлас тĕлĕшпе 2013 çулăн малтанхи пĕтĕмлетĕвне тата нумай хваттерлĕ çуртсенче пĕрлехи пурлăха тĕпрен юсама регион тытăмĕсем йĕркелессине сӳтсе явнă.***

Патшалăх корпорацийĕн – Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха çĕнĕлле йĕркелеме пулăшакан фондăн сăнав канашĕн председателĕ Сергей Степашин граждансене ишĕлме пултаракан çуртсенчен куçарас ыйтусене Раççей Правительстви тĕрĕслесех тăнине палăртнă. Вăл патшалăх программисене мĕнлерех пурнăçланине общество енчен те контрольлемеллине каланă.

2013 çулта Чăваш Енре республикăн икĕ программине пурнăçланă: 2012-2013 çулсенче «Граждансене Чăваш Республикин территорийĕнче вырнаçнă, ишĕлме пултаракан пурăнмалли çурт-йĕр фондĕнчен куçарасси» тата 2013-2017 çулсенче «Граждансене Чăваш Республикин территорийĕнче вырнаçнă, ишĕлме пултаракан çурт-йĕр фондĕнчен куçарасси».

Республикăн 2012-2013 çулсенче граждансене ишĕлме пултаракан çуртсенчен куçармалли программипе япăхса çитнĕ 67 çуртра /7,6 пин тăв. м/ пурăнакан 226 çемьене куçармашкăн 234,9 млн тенкĕ уйăрнă. 2014 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне программăна пурнăçа кĕртнĕ, граждансене пурăнмалли çĕнĕ те хăтлă хваттерсене куçарнă.

Республикăн 2013-2017 çулсенче граждансене ишĕлме пултаракан çуртсенчен куçармалли программипе япăхса çитнĕ 264 çуртра /48,8 пин тăв. м йышăнакан 1460 хваттерте/ пурăнакан 3883 çынна /1460 çемьене/ куçармашкăн 1381,3 млн тенкĕ уйăрма палăртнă. 2014 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне çак программăна пурнăçласа фондăн тата Чăваш Республикин республика бюджечĕн укçи-тенкипе нумай хваттерлĕ 31 çуртри 299 çынна çĕнĕ 121 хваттере /4,51 пин тăв. м/ куçарнă.

Республикăра тĕпрен юсав ĕçĕсем ирттермелли тытăма йĕркелес тĕллевпе «Чăваш Республикин территорийĕнче вырнаçнă нумай хваттерлĕ çуртсенчи пĕрлехи пурлăха тĕпрен юсас тытăмра уйрăм право хутшăнăвĕсене йĕркелесси çинчен» саккун йышăннă. Нумай хваттерлĕ çуртсем техника тĕлĕшĕнчен мĕнле пулнин мониторингне ирттермелли, патшалăх пулăшăвĕ памалли йĕркесемпе условисене, нумай хваттерлĕ çуртсенче пĕрлехи пурлăха тĕпрен юсассине тивĕçтерме кирлĕ укçа-тенке тĕллевлĕ тăкакланине тĕрĕслемелли йĕркене, çавăн пекех тĕпрен юсав ирттермешкĕн кашни уйăхра хывмалли укçан чи пĕчĕк виçине /1 тăв. метршăн 5 тенкĕ те 20 пус/ палăртнă.

2008-2013 çулсенче Чăваш Республикинче нумай хваттерлĕ çуртсене юсама 2,982 млрд тенкĕ уйăрнă. Çак укçа-тенкĕпе нумай хваттерлĕ 1416 çурта тĕпрен юсанă.

■ **А.ЛЬВОВА**

*Çын тата саккун*

# «Вăрттăн» тупăш сиенĕ пирки

***Конвертпа илекен ĕç укçи, хваттере тара парса тăвакан тупăш – вĕсем вăрттăн пулнипе, çав усламран çынсем налук тӳлеменнипе сăлтавланнă сиен пирки тĕплĕ калаçу пулчĕ Правительство çуртĕнче ĕнер иртнĕ пресс-конференцире. Унта çак сферăсемшĕн яваплă темиçе ведомство представителĕсем хутшăнчĕç.***




www.en-ua.com сăн ӳкерчĕкĕ

Тупăшран илекен налук – вырăнсенчи бюджетсен никĕсĕ. Шел те, Федерацин налук службин республикăри управленийĕн пай пуçлăхĕ Татьяна Архипова палăртнă тăрăх – Чăваш Енре ĕçлекенсене пĕчĕк шалу тӳлекен предприяти-организаци ытла та нумай. Çавнашкаллисен шутне 2,8 пине яхăн ĕç паракана кĕртнĕ. Ĕç укçин уйăхри саккунпа çирĕплетнĕ чи пĕчĕк виçинчен /маларах вăл 5205 тенкĕ пулнă, кăçалхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен – 5554 тенкĕ/ сахалрах тӳлекен те пайтах. Ертӳçĕсене тивĕçлĕ комиссисене чĕнсе тустарнă хыççăн 1,7 пине яхăн предприятире шалăва ӳстернĕ-ха, апла пулин те ыйту çивĕччи куç кĕрет. Налукçăсем çынсене вăрттăн ĕç укçи тӳленĕ тĕслĕхсем пирки пĕлтермешкĕн «хĕрӳ лини» те уçнă – 30-27-87 телефонпа шăнкăравласа «систерме» пулать.

Анчах чылай чух ĕçлекенсем шалăва официаллă мар, конвертпа тӳленипе хăйсемех килĕшеççĕ-çке – çакă ура хурать. Ĕç паракансем саккуна пăснине тупса палăртасси те йывăрланать. Патшалăхăн ĕçлев инспекцийĕн ертӳçин çумĕ Раиса Павлова ĕç укçине вăхăтра тӳлемен организацисен реестрне йĕркелени çинчен пĕлтерчĕ. Анчах çакнашкал мерăсем кăна çителĕксĕрри те иккĕленӳсĕр.

Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕн управляющийĕн çумĕ Ирина Коннова вара çынсем официаллă мар шалупа çырлахни каярахпа хăйсемшĕнех кутăнла çаврăнса тухасси пирки асăрхаттарчĕ. Ĕç укçине вăрттăн илеççĕ тĕк, эппин, ĕç паракан вĕсемшĕн пенси валли тивĕçлĕ укçа куçармасть, апла тăк çын çулсем иртнĕ май тивĕçлĕ канăва кайсан унăн пенсийĕ те пĕчĕк пуласси халех паллă. Реформа хыççăн пенсие шутласа палăртмалли йĕрке улшăннине, ăна никĕслекен самантсем /шалу виçи, стаж.../ тĕлĕшпе çĕнĕлĕхсене çирĕплетнине кура ватлăх çулĕсенче çурăк валашка умĕнче тăрса юласси те часах.

Хальлĕхе вара нумайăшĕ официаллă шалу пĕчĕк пулнипе, хушма ĕç укçине вăрттăн илнипе çырлахать. Ĕç вырăнĕ тĕлĕшпе лару-тăру йĕркеллĕ чухне никам та ӳпкелемест-ха. Анчах предприяти ертӳçи çынна ĕçрен хăтарма шут тытрĕ тейĕпĕр. Паллах, сăмах вĕççĕн каласса таталнă чухлĕ мар, шалăва ĕç килĕшĕвĕнче палăртнă чухлĕ çеç тӳлет. Çын кăмăлсăр, çăхав çырать, анчах кун пек чухне Ĕçлев инспекцийĕнче те пулăшаймаççĕ – килĕшĕвне çын хăех алă пуснă-çке.

Тепĕр енчен, асăннă «вăрттăнлăх» патшалăха та пысăк сиен кӳрет – бюджетсем тивĕçлĕ тупăша илеймеççĕ. Çынсем хăйсен хваттерĕсене укçалла тара пани пирки те çавнах каламалла. Асаттерен еткере юлнă хваттере ют çынна укçалла янăшăн та налук тӳлемелле, анчах кун пирки вактăвек теме пулать. Хăшĕсем вара çапла майпа услам тăвассине бизнеса çаврăнă – темиçешер хваттер тытса тăраççĕ, кашнинченех укçа «тумлать». Çулталăклăха-уйăхлăха кăна мар, сехетлĕхеталăклăха та тара параççĕ – кун пек чух тупăш уйрăмах пысăк теççĕ. Услам тăваççĕ, анчах налук тӳлемеççĕ. Сăмах май, çакнашкал тĕслĕхсем пирки те налукçăсен çӳлерех асăннă телефонĕпе шăнкăравласа пĕлтерме пулать – мерăсем йышăнĕç.

Çапах калаçăва хутшăннă ведомствăсен представителĕсем асăннă йышши хваттерсене тупса палăртасси чăрмавлă пулнине те йышăнчĕç. Хваттерĕсене тупма пулать-тĕр-ха, анчах вăрттăн тупăш илнине ĕнентерме çăмăл мар. Усламçă яланах «тăвансем пурăнаççĕ, укçа илместĕп» теме пултарать-çке. Çавăнпах ку ĕçе полицие те явăçтараççĕ.

ЧР ШĔМĕн полицин участок уполномоченнăйĕсен ĕç-хĕлне йĕркелекен пайĕн пуçлăхĕн çумĕ Олег Тевянов çĕр-шывра терроризмпа çыхăннă ĕç-пуç çивĕччине кура хайхи «пушă» хваттерсене сăнаса тăни пушшех пĕлтерĕшли çинченаларĕ. Вĕсенче такам та пурăнма пултарать-çке – куçран вĕçертме юрамасть. Тĕрĕслевсем ирттернĕ май «резина хваттерсем» те вăрттăнлăхран тухаççĕ. Çавнашкал иккĕленӳ 15 хваттер тĕлĕшпе пулнă. Пĕр тĕслĕхпе уголовлă ĕç пуçарнă ĕнтĕ. Пĕр çын Раççее чикĕ леш енчен ĕçлеме килекен вун-вун «гастарбайтера» регистрациленме пулăшнă – миграци саккунĕсене пăснă.

Олег Георгиевич çак саманта та палăртрĕ: çынсем килĕшӳ, акт хатĕрлемесĕрех хваттерĕсене тара пани хăйсемшĕнех хăрушлăхпа çаврăнса тухнă тĕслĕх те пайтах. Хваттере янă çынсем пурăнмалли лаптăка хуçинчен вăрттăн приватизацилеме тăнисем те пулнă. Е тата – хваттерти пурлăх çухални. Килĕшӳ, мĕнле пурлăх пулнине çирĕплетнĕ акт çук – полицие кайсан та преступлени пулнине ĕнентерме йывăр. Эппин, хутшăнусене официаллă майпа çирĕплетни сыхлăхшăн та кирлĕ. Çакна та пĕлмелле: хваттере урăх çынсене тара панă май илнĕ тупăшран налук тӳлеменшĕн уголовлă майпа та айăплама пултараççĕ. Яваплăхĕ самай çирĕп: 100-300 пин тенкĕ штраф кăна та мар – çулталăклăха ирĕклĕхсĕр хăварасси таранах.

Налук служби пĕтĕмлетнĕ тăрăх – хăйсен хваттерĕсене тара панă май налук декларацийĕ хатĕрлеме тивĕç 1,1 пин ытла çынна тупса палăртнă. Çавна май хывнă хушма налук виçи – 5 млн тенке яхăн. Анчах налукçăсем хăйсем те йышăнаççĕ: пурăнмалли лаптăкран аренда шучĕпе тупăш илекенсем, куншăн налук тӳлессинчен пăрăнакансем республикăра чылай ытларах. Эппин, ĕçлемелли те пайтах. Ку вара – хушма налук, вырăнсенчи бюджетсене пуянлатмалли хушма çăл куç.

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

## КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26

### Спорт судийисем ĕçе хатĕр



***Сочири Олимп вăййисем пуçланиччен шутлă кунсем юлчĕç. Тĕнчери чи пысăк ăмăртăва хутшăнакан спортсменсемпе тренерсем тренировкăсенче ăсталăха туптаççĕ тĕк – спорт судийисем Сочие кайма хатĕрленеççĕ.***

Олимпиадăра спортсменсен тупăшăвне хаклама Чăваш Енри 11 çынна йыхрав хучĕ панă. Нумаях пулмасть Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 2-мĕш спорт шкулĕн тренерĕ, Раççей спорт мастерĕ, пултаруллă биатлонçă Денис Салдимиров Олимп вăййисен тĕп хулине тухса кайнă. Вăл унта йĕлтĕр тата биатлон трассисене пăхса тăрĕ. Тĕрлĕ ăмăртура опыт пухнă тепĕр 10 судья – Вячеслав Ильин, Андрей Михайлов, Юрий Плотников, Владислав Антонов, Олег Булыгин, Валерий Васильев, Сергей Овсяников, Константин Мясоедов, Василий Никитин, Владимир Сидягин – Паралимп вăййисенче ĕçлĕ.

**А.МИХАЙЛОВ.**



### Пултарулăх каçĕ

***Муркаш районĕнчи Калайкассинчи культура çуртĕнче йывăçа эрешлесе касакан ăста Петр Мазуркин çуралнăранпа 65 çул çитнине халалласа пултарулăх каçĕ иртнĕ.***

Уяв тĕлне «Кун-çул эрешĕсем» курав йĕркеленĕ. Муркашри тĕп вулавăш ĕçченĕсем вара «Золотым узором – краше!» пĕчĕк кĕнеке кăларнă. Çавăн пекех мăшăрăн – Петрпа Зинаидăн – Мазуркинсен искусствин вернисажĕ уçăлнă. Унта – эрешлесе каснă ĕçсем, тĕрленĕ япаласем.

Юбиляра Муркаш район администрацийĕн культура тата архив ĕçĕн пайĕн пуçлăхĕ Елена Чернова саламланă. Елена Геннадьевна ЧР культура министрĕн Вадим Ефимовăн, Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕн Ростислав Тимофеевăн салам сăмахĕсене вуланă. Катькас ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Геннадий Лебедев Петр Мазуркина культура отраслĕнче чылай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн Хисеп хучĕпе чысланă.

Паллă ăстана Муркаш тăрăхĕнчи «Тăванлăх», «Çăлкуç» фольклор ушкăнĕсемпе «Ентеш» юрăпа ташă ансамблĕ хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарнă.

**С.ИВАНОВА.**

### Культура ĕçченĕ патĕнче – хăнара

***Культура çулталăкĕнче культура ĕçченĕсем тĕрлĕ мероприяти ирттерме, тĕл пулусем йĕркелеме тăрăшаççĕ. Çав вăхăтрах аслă ăру çыннисене те манмаççĕ.***

Улатăр районĕнчи Кивĕ Эйпеçри культура вучахĕн управçисем сакăр теçетке çула хыçа хăварнă Мария Казанцева патĕнче хăнара пулнă. Мария Васильевна хăй вăхăтĕнче клубра 20 çул ытла ĕçленĕ. Ватă хаваспах хăйĕн опычĕпе паллаштарнă, вăрттăнлăхĕсене уçнă. Çав çулсенче ялти клуб çутă та хăтлă пулнă-мĕн. Эрнере темиçе хут та аслисемпе ачасем валли кинофильм кăтартнă. Шупашкар артисчĕсем тăтăш килнĕ, хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарнă. Вырăнти ăстасем те вĕсенчен юлман: концерт кăтартнă, спектакль лартнă. «Клубра халăх лăк тулличчĕ, пан улмине ӳкме вырăн çукчĕ»,– хавхаланса аса илнĕ кинемей.

Кивĕ Эйпеçре культура паян та «чăхăмламасть-ха». Кунта эстрада ансамблĕ те, фольклор ушкăнĕ те, театр студийĕ те... пур. Анчах культура çурчĕ çук. Кăçал Кивĕ Эйпеç ял тăрăхĕнче культура «вучахне» çĕклеме пуçласса питĕ шанать Мария Казанцева. Ял çыннисем ырă çак пулăма чăтăмсăррăн кĕтеççĕ.

**А.ГРОМОВА.**

### Тĕнче ăмăртăвĕнчен – медальпе

***Красноярск хулинче ирĕклĕ мелпе кĕрешекенсен Пĕтĕм тĕнче турнирĕ вĕçленнĕ. Виçĕ кунра 18 çĕр-шывран пынă 200 ытла спортсмен Иван Ярыгин ячĕллĕ гран-прие çĕнсе илессишĕн тупăшнă.***

Çĕнĕ йĕркепе иртнĕ ăмăртура Раççейĕн пĕрлештернĕ команди пухмача 11 ылтăн, 11 кĕмĕл тата 23 бронза медальпе пуянлатнă. Юбилейлă турнирта Чăваш Ен спортсменĕсене те ăнăçнă. Шупашкарти Олимп резервĕсен 5-мĕш спорт шкулĕнче вĕренекен Вероника Чумикова (тренерĕ Ольга Смирнова) 55 килограмлă виçере виççĕмĕш вырăн йышăннă, 21-ри спорт мастерĕ Надежда Федорова хăйĕн ушкăнĕнче пьедесталăн иккĕмĕш картлашки çине хăпарнă. Светлана Константинова тренер патĕнче ăсталăхне туптакан пике çак ăмăртăва иртнĕ çулсенче те хутшăннă, анчах кашнинчех ăнман. Ку хутĕнче вара çĕр-шыври чи пултаруллă кĕрешӳçĕсене парăнтарса кĕмĕл медаль çĕнсе илнĕ.

**Е.АНДРЕЕВ.**



ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ

# ХАМĂРЛĂХА УПРАСЧĔ

**Республикăра Культура çулталăкĕ уçăлнине савăнăçлă лару-тăрура паллă турăмăр. Çавна май Оперăпа балет театрĕн фойинче /мероприяти шăпах çавăнта иртнĕччĕ/ отрасль тытăмĕнчи учрежденисем хăйсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштаракан экспозицисем хатĕрленĕччĕ. Вĕсене пăхса çаврăннă май чунра лайăх пулса кайрĕ. Кураври пĕтĕм экспонат тăван йăла-йĕркепе çыхăннă. Чăваш тумне те, туйне те, авалхи ял пурнăçĕпе кулленхи ĕçне те ĕненмелле сăнласа кăтартнă унта. Шупашкарти ӳнер училищинче вĕренекенсем те, Ф.П.Павлов ячĕллĕ музыка училищин студенчĕсем те, халăх маçтăрĕсем те тăрăшнă çакăншăн. Архив ĕçченĕсене те тав тумалла. Вĕсем уява пынисене иртнĕ ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсен варрине каялла «тавăрма» пултарчĕç. Хальхи çĕнĕ технологипе усă курса чаплă ентешĕмĕр Иоаким Максимов-Кошкинский ӳкернĕ илемлĕ фильмпа киленме май туса пачĕç. Чăваш тумĕн куравĕ те иртрĕ. Çакăн хыççăн çапла шухăшлама май пур: пирĕн тымар çирĕп. Çулсем иртнĕ май вăл ан хавшатăр тесен мĕн тумалла? Паян пуррине малашлăх валли упраса тата малалла аталантарса пырасси – культура тытăмĕнче ĕçлекенсен тĕп тĕллевĕ.**

**Вĕсем çапла тăваççĕ те. Кирек мĕнле йывăрлăха пăхăнмасăр, самана витĕмне парăнмасăр. Сăмахăма вун-вун тĕслĕхпе çирĕплетме пулать. Апла туса вăхăта, хаçатра уйăрса панă лаптăка сая ямăпăр.**

**Мĕн кĕтетпĕр эпир Культура çулталăкĕнчен? Унăн тĕллевĕсене Раççей Президенчĕ Владимир Путин 2013 çулхи ака уйăхĕн 22-мĕшĕнче кăларнă «Раççей Федерацийĕнче Культура çулталăкĕ ирттересси çинчен» Указра уçăмлă палăртнă. Вĕсем: обществăна культура ыйтăвĕсемпе тимлĕрех пулма хистесси, культурăпа истори еткерлĕхне упраса хăварма явăçтарасси тата Раççей культурин витĕмĕпе пĕлтерĕшне тĕнче шайĕнче çĕклесси.**

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Чăваш Енре Культура çулталăкĕ уçнă май ирттернĕ мероприятире çак шăхăша малалла пуянлатрĕ, анлăлатрĕ: «Культура» ăнлав этемлĕх цивилизацийĕнче нумай ĕмĕр хушшинче туса çитернĕ илемлĕх хаклăхĕсене кăна палăртмасть, вăл çынсен хушшинчи хутшăнусен мĕн пур сферине пырса тивет. Производство культурисĕр паян ĕçĕн пысăк тухăçлăхне тивĕçтересси пирки шухăшламалли те çук, дискусси культури çивĕч ыйтусене кирлĕ пек татса памалли тата тĕрĕс йышăнусем тумалли никĕс пулса тăрать, пулăшу ĕçĕсен рынокĕнчи конкурентлăх вара пахалăхлă сервис пулнинчен килет. Культурăна, унăн пĕлтерĕшне анлăн ăнланса, тăтăшах ӳстерсе пырасси пирĕн республикăра норма пулса тăмалла». Республика ертӳçи пире Культура çулталăкĕнче искусствăн, литературăн, кĕвĕ-çемĕн, живописĕн чи çӳллĕ енĕсем пирки çеç мар, хутшăну, ĕç тата производство культури çинчен те калаçтарасшăн, шухăшлаттарасшăн.**

**Урăхла пулма та пултараймасть. Пĕтĕмĕшле культурăсăр этемлĕх малалла аталанаймасть. Хутшăну культуринех илер. Республикăра 128 халăх çынни тата 8 этнос ушкăнĕ пурăнать. Тав турра, вĕсен хушшинче килĕшӳлĕх, ăнлану, çураçулăх хуçаланаççĕ. Çак паха енсене упраса малалла тĕрĕс-текел тытса пымалла. Лăпкă, мирлĕ пурнăç мĕн хака ларнине виçмелли, курмалли сăлтавсем ан тупăнччăр. Ыттисен тĕслĕхĕ витĕмлĕ урок вырăнĕнче пултăр.**

**Михаил Игнатьев ЧР Патшалăх Канашне янă Çырăвĕнче каланă шухăшсемпе килĕшмелле. «Тăнăçлăха, килĕшĕве тата пĕрпĕрне ăнланнине упраса пурăнса кăна эпир экономикăна аталантармалли, обществăн социаллă кăмăл-туйăмне лайăхлатмалли, çемьесенче вара сывă, ашшĕ-амăшĕ савăнса кĕтекен хаваслă ачасем çуралмалли майсем туса хума пултаратпăр!» – тенĕ унта.**

**Экономика, социаллă аталану тата ытти те культура çук тăк ниме те тăмаççĕ. Çакăн пирки хăй вăхăтĕнче Дмитрий Лихачев академик пурте илтмелле «чан çапнă». Кая юлса пулин те ăсчахăн ĕмĕт-шухăшĕ пурнăçланчĕ. Пире Культура çулталăкĕ çеç мар, Культура вунă, çирĕм, вăтăр ... çуллăхĕ кирлĕ. 365 куна тăсăлакан тапхăрта ку енĕпе мĕн палăртнине пурнăçа кĕртме çăмăл пулмĕ, çапах та мĕн пуррипе тухăçлă усă курмалла. Пирĕн, чăвашсен, хамăрлăха упрамалла. Ку енĕпе патшалăх влаçĕн, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен, культурăпа вĕренӳ ĕçченĕсен, халăх пĕрлешĕвĕсен чăвашлăха сыхласа хăварас ĕçре чи малта тăмалла.**

**Ку енĕпе çамрăк ăрупа уйрăмах тимлĕ пулни пĕлтерĕшлĕ. Вĕсен черчен чунне кирлĕ мар япала, тĕнче глобализацийĕн витĕмĕ минретме пуçличчен тăван культурăпа тата историпе çывăхлатмалла, хамăрăн аваллăхшăн, пуян йăла-йĕркешĕн мухтанма-мăнаçланма сăлтавсем туса памалла. Асанне-кукамайăн, атте-аннен мешехелне çĕнĕлĕхсем кĕртсех пырсан вĕсене тата хамăра сыхласа хăварас шанчăк пур.**

**Çакна тума вара пире республика культура отраслĕ пулăшĕ. Чăваш Енĕн хальхи вăхăтри культура политикин тĕп тĕллевĕсенчен пĕри вăл – çынна пултарулăх тĕлĕшĕнчен ӳсме, хăйĕн ăс-хакăлне аталантарма условисемпе майсем туса парасси. Культура çулталăкĕнче тата вирлĕрех, сулмаклăрах ĕçлесчĕ.**

■ **Надежда СМИРНОВА**

### Çанталăк çинчен

Паян уяр çанталăк пулать. Çил çурçĕртен çеккунтра 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 28, каçхине 33 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 775 мм, сывлăшри нӳрĕк 70 процент.

**Кун тăршшĕ 8 сехет те 24 минут.**

*Ас тăвăм*

# Хачăксем те хӳтĕленĕ

***Ленинграда хăй вăхăтĕнче Ишлей районне кĕнĕ Хачăк ялĕнчен улттăн хӳтĕленĕ. Вĕсенчен пĕри – Владимир Михайлов артиллерист.***



***• Владимир Михайлов артиллерист.***

Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи вăрçа хутшăннă ентешĕн çар опычĕ пулнă. Комсомолец-сержантăн расчечĕ подразделенире лайăххисен шутĕнче пулнă, батарейăра ыттисемшĕн ырă тĕслĕх вырăнне пĕрре кăна мар палăртнă командовани. Анчах тăшман та çывăрман. 1943 çулхи çĕртмен 22-мĕшĕнче, вăрçă пуçланнăранпа икĕ çул çитнĕ кун, Михайлов расчечĕн орудийĕ çывăхĕнче тăшман снарячĕ çурăлнă: наводчик вилнĕ, снаряд авăрлакан тата расчет командирĕ аманнă, оруди стройран тухнă. Михайловпа унăн юлташне лазарета ăсатнă.

Мускав çывăхĕнчи Бескудная станцири госпитальтен сывалса тухнă хыççăн Владимир Михайлов хăйĕн чаçне таврăннă. Командовани ăна кĕçĕн лейтенант званине панă, саперсен взводĕн командирне çирĕплетнĕ. Взвод Нева урлă понтон кĕперсем хывнă, юсавлăхне сăнасах тăнă. Анчах та 1943 çулхи çурла уйăхĕн 16-мĕшĕнче тăшман бомбисем понтон кĕпер çине ӳкнĕ: Михайловпа темиçе салтак-сапер вилнĕ. Нева шывĕ вĕсене яланлăхах хăйĕн ытамне йышăннă.

Ленинграда 1941-1943 çулсенче хӳтĕлекенсен ретĕнче Хачăк ялĕнче çуралса ӳснĕ Василий Михайлов пулеметчик, Яков Румянцев снайпер, Михаил Артемьевпа Григорий Медяков пехотинецсем хаяр çапăçусенче паттăрлăх кăтартнă. Иван Кондратьева /хуçалăх взвочĕ/ йывăр аманнă хыççăн госпитальте ура çине тăратайман.

Хачăк ялĕнче çуралса ӳснĕ Георгий Мольков 1939-1941 çулсенче ВЛКСМ Шупашкар хула комитечĕн физкультурăпа спорт пайне ертсе пынă. Вăрçа çурла уйăхĕнче политбоец шучĕпе ăсаннă. Балти флочĕн çар карапĕ çинче Ленинграда çурçĕр енчен хӳтĕлес тĕллевпе пынă операцисене хутшăннă хастар моряксен йышĕнче пулнă. Пĕр çапăçура карап çине нимĕç самолечĕ бомбăсем тăкать. Никам та çăлăнаймасть.

Александр Бычков – Хачăкри колхозăн ветеринари фельдшерĕ. Çар хĕсмечĕн çул-йĕрĕ ăна блокадăри Ленинграда илсе çитернĕ. Пĕр чаçре ветфельдшер валли ĕç тупăнать. Çапăçусенчен пĕринче вăл аманать. Госпитальтен киле таврăнсан ăна колхоз председательне суйлаççĕ.

■ **Галина МИХАЙЛОВА.**
Шупашкар районĕ

## Черет кĕскелет

***Республикăра шкулчченхи вĕренӳ тытăмне çĕнетесси малалла пырать. Районсенче ача сачĕн черетне кĕскетес тĕллевпе çĕнĕ объектсем хăпартаççĕ.***

Акă Вăрмарта 145 вырăнлăххине тăвассине иртнĕ çул вĕçĕнче пуçарчĕç. Ăна районти строительство организацийĕ – «Урмарская» КСО АХО – тăвать. Çурт никĕсĕ хатĕр, хальхи вăхăтра тĕп тата хуçалăх çурчĕсен стенисене купалас ĕç пырать.

Çак кунсенче районта Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев пулнă, асăннă объект строительствин тапхăрне кĕскетесси пирки каланă. Сĕнĕве шута илсе организаци ĕçченĕсем графике çирĕп пăхăнаççĕ. Паянхи кун тĕлне строительство-монтаж ĕçĕнче 26 çын ĕçлет.

**И.ИВАНОВА.**

## Гаврилова арестленĕ

***Шупашкарти Ленин районĕн сучĕ «Федерацин çул-йĕр агентствин Чул хула-Ĕпхӳ автомагистраль управленийĕ» хысна учрежденийĕн пуçлăхне Сергей Гаврилова арестлеме санкци панă.***

Уголовлă ĕçе Федерацин хăрушсăрлăх службин республикăри управленийĕн следстви пайĕ пуçарнă та – кун пек чух ĕç-пуça тĕплĕнрех пĕлме йывăррине хăнăхрăмăр ĕнтĕ. Хальлĕхе çакă паллă: Гаврилова республикăри çулсем çинчи строительство ĕçĕсем валли уйăрнă 100 млн яхăн тенке вăрлама хутшăннă тесе шанмаççĕ. Уголовлă ĕçе УК 159 статйин 4-мĕш /уйрăмах пысăк виçепе улталани/ тата 160 статйин 4-мĕш /укçана уйрăмах пысăк виçепе вăрлани е тăкакласа пĕтерни/ пайĕсемпе пуçарнă. Предприяти пуçлăхне арестлесе икĕ уйăхлăха изолятора вырнаçтарнă.

Массăллă информаци хатĕрĕсем ФХС сотрудникĕсем «Волга» упрдорăн Шупашкарти офисĕнче ухтару ирттерни çинчен пĕлтереççĕ. Палăртса хăварни вырăнлă: çак предприяти тилхепине тытиччен Гаврилов депутатсен Шупашкар хула Пухăвĕн председателĕ пулнă, 2010 çулхи суйлав хыççăн спикер должноçĕнчен кайма тивнĕ.

**К.АНТОНОВ.**

## Предприяти шучĕпе апатланнă

***Улатăр хулинче ЖКХ ыйтăвĕсем çивĕчленсех çитнĕччĕ. Пĕлтĕр яваплă çак ĕçе урăх çынсем килчĕç те – хулари «ЖКХ управленийĕ» ОООн унччenхи ертӳçин çылăхĕсем çиеле тухнă.***

Район сучĕ çак предприяти экс-директорĕ тĕлĕшпе служба вырăнĕпе усă курса укçана тăкакласа пĕтернĕшĕн пуçарнă уголовлă ĕçе тишкернĕ. Тĕпчев çирĕплетнĕ тăрăх – çак хĕрарăм хула çыннисене коммуналлă пулăшу ĕçĕсемпе тивĕçтерекен предприяти кассинчен Улатăр администрацийĕн сотрудникĕсем, вырăнти пĕр предприяти пуçлăхĕ валли чечек, ытти парне туянма укçа илнĕ, çавăн пекех хулари кафесенче апатланма та тăкакланнă. Çак расхутсем вăл ертсе пыракан предприяти нушисемпе пачах та çыхăнман.

Сиен виçи питĕ пысăк тееймĕн – 37 пин тенкĕ ытларах, хĕрарăм ăна следстви вăхăтĕнчех саплаштарнă пулин те суд директор пулнăскере 3 çуллăха условнăй майпа ирĕклĕхсĕр хăварма йышăннă.

**К.НИКОЛАЕВ.**

# «Культура валли – 129,5 млн тенкĕ нумайрах»

***Кăрлач уйăхĕн 24-мĕшĕнче Пĕтĕм Раççейри «Никам тĕкĕнмен Раççей» çут çанталăк фестивалĕ уçăлнă, ăна Федераци Канашĕ пулăшнипе йĕркеленĕ. Ку мероприятие Раççей Федерацийĕнче Культура çулталăкне уçнине халалланă.***

Федераци Канашĕн Ăслăлăх, вĕренӳ, культура тата информаци политики енĕпе ĕçлекен комитечĕн членĕ Галина Николаева палăртнă тăрăх – çак фестиваль тата Культура çулталăкне халалланă ытти мероприяти Шупашкар хули никĕсленнĕренпе – 550, Чăваш автономи облаçне туса хунăранпа 100 çул çитнине уявлама хатĕрленнĕ тапхăрпа пĕр килнĕ. «Республикăра пурăнакансем Культура çулталăкĕнче культура сферин ыйтăвĕсем тĕлĕшпе тимлĕрех пуласса, пурлăхпа техника никĕсне çирĕплетмешкĕн тăкаксене ӳстерессе кĕтнĕччĕ. Асăннă тытăмра ĕçлекенсем хăйсене хумхантаракан ыйтусене татса парасса, çав шутра ĕç укçине ӳстерессе, шаннăччĕ. Шанăç тӳрре тухрĕ. Кăçал культура валли каякан тăкаксене 129,5 млн тенкĕ ӳстернĕ», – каласа кăтартнă сенатор.

Галина Николаева пĕлтернĕ тăрăх – «Чăваш Республикинчи культура аталанăвĕ» çум программăпа килĕшӳллĕн укçан пысăк пайне ялти культурăпа кану учрежденийĕсене юсамашкăн, библиотекăсемпе музейсен ĕç-хĕлне тивĕçтермешкĕн, культура еткерне упрамашкăн, унпа усă курмашкăн, халăх хушшинче сармашкăн тата патшалăх тĕлĕшĕнчен сыхламашкăн ярĕç. Республикăра Чăваш Ен тулашĕнче те пысăк ят-сум çĕнсе илнĕ фестивальсемпе конкурссем иртеççĕ: Пĕтĕм тĕнчери балет фестивалĕ, Шупашкарти VII кинофестиваль, Пĕтĕм Раççейри «Раççей çăл куçĕсем» фестиваль, Пĕтĕм Раççейри «Руç ăстисем» хушма искусство куравĕ. Искусство шкулĕн чи лайăх преподавателĕн ятне çĕнсе илессишĕн йĕркелекен республикăри пĕрремĕш конкурс та кăсăклă иртессе шанас килет, унăн тĕп тĕллевĕ – ачасемпе ĕçлекен преподавательсен професси сумне ӳстересси.

«Çак çулталăк Раççей халăхĕсен культурине сыхласа хăварассин тата малалла аталантарассин, кăмăл-сипет çĕнелĕвĕн çулĕ пулĕ», – пĕтĕмлетнĕ сенатор.

■ **И.БЕЛОВА**

*Ял пурнăçĕ*

# Мал ĕмĕтпе – малалла

***Турхан ял тăрăхне çитсе вырăнти депутатсемпе уйрăм хастарсем сĕтел тавра пуçтарăнсан та кăмăллă калаçăва тӳрех «кĕрсе» каяймарăмăр.***

– Мĕн ыррине, мĕн пахине каламалла? Ку чухне ял пурнăçĕ пур çĕрте те пĕрешкел-тĕр: хальлĕхе тытăнкаласа тăракан хуçалăхсем те çулсерен йăшаççĕ, унччен пире çăкăр çитернĕ çĕр лаптăкĕсем хыт хура уйне çаврăнни те пăшăрхантарать, вăй питти халăх вара ĕçсĕр çапкаланса çӳресрен юта укçа тума çӳрет. Унсăрăн кил-çурта та çĕнетеймĕн, ача-пăчана та пĕлӳ параймăн. Мал ĕмĕтпе малалла ăнтăлма çăмăл мар пулин те тапаланатпăр, пурнăçа сыпăнтарса пымалли меслетсене шыратпăр. Пирĕн патăмăрта çеç мар, чылай çĕрте паян çакнашкал лару-тăру ĕнтĕ, – пĕр шухăш патне тухрĕç калаçăва хутшăнакансем.

– Ялта культура мероприятийĕ ирттерме те çăмăлах мар. Ташă каçĕсенче те шкул ачисем çеç, тепĕр чухне хуларан студентсем килеççĕха, – хушса хучĕ культура ĕçченĕ Г.Куприянов.

Ял хастарĕсен пăшăрханăвĕпе килĕшмесĕр тăраймăн. Çапах та пурнăç пăрнăçĕсене пăхмасăр пуç усмасăр çӳреме тивет. Тĕрĕссипе, Турхансем çаплах тăваççĕ-ха. Майĕпен пулсан та ял сăн-сăпачĕ çĕнелет, урамĕсем тикĕсленеççĕ, çĕнĕ ăру та хушăнать... Ял тăрăхĕ çулсерен тĕрлĕ программăна пая кĕме тăрăшни те паха. Вырăнти влаç органĕнче вăтăр çула яхăн тăрăшакан В.Антонова специалист халăхпа саманан тĕрлĕ тапхăрĕнче ĕçленĕ. «Пуриншĕн те уйăхпа хĕвел пулаймăн, çапах та яланах ял çынни паян ĕнерхинчен лайăхрах та хăтлăрах пурăнтăр тесе тăрăшнă», – тет вăл. Малалла Вера Алексеевна ял тăрăхĕнче тĕрлĕ программăпа субсиди илнĕ, çурт-йĕрне лайăхлатнă çемьесемпе паллаштарчĕ. 2006 çултанпа 41 çемье çакăн пек çăмăллăхпа усă курнă. Нумай ачаллă икĕ çемье валли пысăк та хăтлă çурт хатĕрлесе çитернĕ. Çывăх вăхăтра вĕсем унта пурăнма куçмалла. Черетре тăракан та сахалăнах мар: 15 çемье.

Урамсемпе тăкăрлăксене кирлĕ пек пăхса тăрасси, хĕллехи вăхăтра вĕсене юртан тасатасси – вырăнти влаçăн чи пирвайхи тивĕçĕ. Паян вăл халăх умĕнче «экзамен» тытмалли чи курăмлă ĕç темелле. Тĕпрен илсен, ял тăрăхĕнче çак ыйту тăтăшах кун йĕркинче. Тури Тăрмăшра, Упамсара пĕрер урама якатса тирпейленĕ, вак чул сарса тикĕсленĕ. Çĕнĕ çулта та çĕнетмелли урамсем пур. Юлашки çулсенче хĕл сивĕ çеç мар, нумай юрлă та пулчĕ. Урамсене вăхăтра юртан уçса тăрассипе ыйту çук. С.Манзуркин депутат çак тивĕçе темиçе çул ĕнтĕ хăй çине илнĕ. Турхан ял тăрăхĕсĕр пуçне таврари ытти яла та çак çăмăллăхпа тивĕçтерсе тăрать.

– Ял малалла та пурăнтăр, аталантăр тесе уйрăм хастарсем пысăк пулăшу параççĕ. Сăмахран, Тури Тăрмăш ялĕнче хура кĕркуннехи каççенче урамсенче çутă. Е.Сергеева депутат тăрăшнипе тата йĕркелесе тăнипе кунти çутăсене халăх хăй вăйĕпе тытса тăрать тесен те йăнăш пулмĕ. Лампочка çунса кайсан та никамран пулăшу ыйтмаççĕ – çийĕнчех улăштараççĕ.

Ку тĕлĕшпе Турханти В.Косойкин депутат – пысăк пуçаруçă. Тĕрлĕ ĕçре пиçĕхнĕ ял хастарĕ халăха пăшăрхантаракан чылай ыйтупа тимлет. «Çавăн пек маттурсем пулнипех ял тăрăхĕнчи кулленхи ыйтусене татса пама çăмăлрах», – кăмăллăн калаçать ял тăрăх пуçлăхĕн çумĕ И.Данилов. Сăмах май каласан, Иван Васильевич хăй те вăтăр çул хушшинче вырăнти влаç ĕçĕшĕн пысăк ят-сум çĕнсе илнĕ. Темиçе çул каялла вăл республикăра чи малтанхисен йышĕнче «Муниципалитетăн чи лайăх служащийĕ» ята тивĕçнĕ.

■ **Альбина ЕГОРОВА.**
Патăрьел районĕ

*Аваллăх утравĕ*

# Мунча хыççăн, е Воронковăн туйăмлă пуканисем



***• А.Воронков тата унăн пуканисем.***

***Чăваш йăли-йĕркине, культурине, аваллăхне çутатакан çĕнĕ ярăма эпĕ Культура çулталăкне халаллатăп. Техника вăйлă аталаннă тапхăрта та, компьютер, Интернет ĕмĕрĕнче те пур-ха чăваш ялĕсенче «ахах-мерчен». «Аваллăх утравĕ» ярăма вара пукане теминчен пуçлăпăр.***

### Сăнне ӳкерсен чун кĕрет-мĕн...

Теттесем çĕр чăмăрĕ çинче сĕм авалах пулнă. Пуканене пуринчен те маларах шухăшласа тупнă. Унăн историйĕ Египетри пирамидăсене тунă вăхăтран пуçласа паянхи кунччenех тăсăлать. Нумай халăхăн çакнашкал халап пур: «Малтанах турăсем тĕрлĕ материалтан пукане тунă, кайран вĕсене çынна çаврăнă». Ученăйсем çирĕплетеççĕ: çĕр çинче çын пурăнма пуçласанах пуканене шухăшласа тупнă. Ара кирек хăш материалтан та – улăмран, йывăçран, пусмаран /татăкран/ тата ытти те – ăсталанă çын кӳлепине пукане теме пулать. Тĕнчери музейсенче пирĕн эрăччен 40-112 пин çулсенче тунă кӳлепесем /идолсем, йĕрĕхсем, кумирсем, статуэткăсем/ упранаççĕ. Египет пуканисем пуринчен те маларах палăрнă. Вĕсен çӳçĕ çыннăнни евĕрлех пулнă, алли-ури те хускалнă.

Грецире тата Римра пуканесене ăвăсран /карасăн/, тăмран майлаштарнă. Хушăран вĕсене сĕре çутă тĕссемпе сăрланă. Раççейре вара пуканесене чăн малтан... кăмрăкран тунă. «Хĕрарăм турри» тенĕ ăна. Авалхи тепĕр пуканене хĕрарăм касса, пĕчĕк хутаçа пуçтарса пынă çӳçрен меллештернĕ. Анчах кун пек теттепе выляман. Ăна çемьере управçă, сыхлавçă вырăнне хунă. Çакăн пек пуканене амăшĕ хĕрне туй кунĕнче парнеленĕ. Çапла, йăхран йăха куçса пынă çак йăла. Аса илер-ха «Василиса прекрасная» юмаха. Унта амăшĕ пурнăçран уйрăлас умĕн саккăрти хĕрне пукане парнелет. «Ăна ялан пĕрле илсе çӳре, вăл сана пулăшĕ»,– тет.

Хресчен çемйисенче вара хĕр ачасем ĕлĕкрен татăк-тĕсĕкрен тунă пуканепе вылянă. Хăш-пĕр килте вĕсен шучĕ çĕре те çитнĕ. Тула кĕпĕрнинчи ялсенче чи пĕчĕккисем валли татăксенчен «кувадка» ăсталанă. Ăна сăпкаран çакса янă. Çак пукане пепкене усалтĕселтен упрать тесе ĕненнĕ. Мĕн калăн: ачапча яланах юратнă пуканене. Хĕр пĕрчисем çапла мелпе амăш «рольне» вылянă, аслисен пурнăçне кĕме хатĕрленнĕ. Çитĕннисем вара пукане тĕпренчĕкĕн ыйхине упранине, ăна сыхланине ĕненнĕ. Асамлă çак тетте аслисемпе пĕчĕккисен тĕнчине çыхăнтаракан паллă та.

Ирçе-çармăс çемйисенче ĕлĕкрен хĕр ачасем амăшĕ е кукамăшĕ /асламăшĕ/ пусмаран çĕлесе панă пуканепе вылянă. Каярах ăна хĕр «пĕрчисем» хăйсем ăсталама хăнăхнă. Ун тăрăх пулас кил хуçи арăмĕн ăсталăхне, тирпейлĕхне, ĕçченлĕхне хакланă. Пуканене кĕпетумтир тăхăнтартнă, анчах сăнне ӳкермен. Сăн «парнеленĕ» пуканене чун кĕнине, çавна май вăл хĕр ачана сиен кӳме пултарассине ĕненнĕ халăх. Çак тетте ача-пăчашăн вăйă-кулăра туслюлташ вырăнне пулнă. Вăлах çыннăн шалти тĕнчине ăнланма пулăшнă. Чылай чухне хĕр пĕрчисен тĕрлĕ пукане пуххи, гардеробĕ тата хуçалăх /йывăçран, хурăн, çăка хуппинчен, тиртен, сăрантан, кĕççерен, çăмран тата ыттинчен ăсталанă/ пулнă. Аслисем вĕсем валли хурăн хуппинчен савăт-сапа, çӳпçе, çăкаран сăпка, кравать ăсталаса панă. Хĕр ача хĕрарăм ĕçне тума хăнăхтăр тесе тăрăшнă. Ӳлĕм унран лайăх амăшĕ, типтерлĕ кил хуçи хĕрарăмĕ пултăр тесе ăшталаннă. Хантсемпе мансисен пукани «акань» ятлă. Ăна тĕрлĕ пусмаран çĕленĕ, капăрлатнă.

Кашни халăхăн пукани хăйне евĕр, хăйне манерлĕ. Вăл, мĕн пур этемлĕх культурин пĕр пайĕ шутланаканскер, сăнарĕнче хăйне ăсталакан халăх сăнне упрать. Пукане тăрăх эпир çав халăх пирки /культури, йăли-йĕрки, историйĕ.../ нумай пĕлме пултаратпăр. Чăваш ачисем те ытти нумай халăх пекех ĕлĕкрен пуканепе вылянă. Чылай чухне ăна татăкран, мамăкран, кĕççерен, йывăçран ăсталанă. Сăмах май, Татьяна Шаркова ăста чăваш наци пуканин историне тĕпченĕ. Вăл хăй те пукане ăсталать, вĕсене пухать, куравсем йĕркелет. Чи пахи вара – çак ĕçе çамрăк ăрăва явăçтарать.

### Етĕрнесен куравне çитсе курмаллах

Чăваш наци культурине, йăли-йĕркине упрас, вĕрентекенсемпе вĕренекенсен пултарулăхне аталантарас, ăстасене тупса палăртас, вĕсене хавхалантарас тĕллевпе Етĕрнери 3-мĕш шкулта «Наци пуканин нумай енлĕхĕ» курав йĕркеленĕ. Ăна вĕсем Культура çулталăкне халалланă. Унта Етĕрне тăрăхĕнчи кашни пĕлӳ çурчĕ, Етĕрнери тĕп вулавăш тата Тамара Ионова усламçă хастар хутшăннă.

Куракана кашни пукане хăйне евĕрлĕхĕпе, илĕртӳлĕхĕпе тыткăнланă. Ăстасем палăртнă тăрăх – темĕн тĕрли те пулнă куравра. Вĕсене тăмран, йывăçран, пусмаран, папье-машерен, улăмран, пенопластран, хутран тата ыттинчен тунă. Унта уйрăм пуканесем кăна мар, композицисем те пур-мĕн. Хучаш шкулĕн чăваш тумĕллĕ пуканисем «Улаха» сăнарлаççĕ. Пĕрçырлансен, тăмран йăваланисем, çемье пурнăçне кăтартаççĕ. Ирçе шкулĕн «кил хуçипе» «арăмĕ» тата вĕсен «ачи» вара уява кайма хатĕрленнĕ евĕр чăваш кĕпине тăхăннă. Кунтах – «Халăхсен туслăхĕ» тата «Тĕпел кукринче» композицисем. Чирĕккассисем управçă, сыхлавçă пуканесем тунă. Вĕсем хуçине канлĕх, сывлăх, пуянлăх, юрату, телей парнелеççĕ имĕш. Куравра яппун тумĕллĕ пуканесем /Засурски сали/ хăйне евĕрлĕхĕпе уйрăлса тăнă. «Мĕн чухлĕ илем, илĕртӳлĕх, ĕлккенлĕх ку выставкăра. Ăна, паллах, кашнин курмалла! Курни чун-чĕрене çунатлантарать»,– хавхаланса пĕлтерет Александр Воронков. Пĕтĕмпе унта – 561 /!/ пукане. Апла халăх пуканене халĕ те юрататъ. Кăмăллать кăна мар, ăсталать те, вылять те. Асăннă курава шкулсем кăна хутшăннă, енчен те ялти ăстасем те хăйсен ĕçĕсене тăратнă тăк – ку хисеп тата пысăкрах пулатчĕ.

### «Амазонка касса кăларас килет»

Куравра «Автор пукани» номинацире çĕнтерсе 1-мĕш вырăн йышăннă Александр Воронков Етĕрне районĕнчи Кăкшăмри шкулта физкультура вĕрентет. Александр Владимирович курава йывăçран касса кăларнă 43 пĕчĕк пуканине тăратнă.

Александр Воронковăн шкулти спортзал çумĕнчи пĕчĕк пӳлĕмĕнче сĕтел çине лартса тухнă пуканисемпе хавас пах паллашатăп. Чăнах та, вĕсем, лавккаринчен пĕрре те кая мар. Илĕртӳллĕскерсем, тĕрлĕ тĕслĕскерсем йывăçран касса кăларнă пек те туйăнмаççĕ. Кам кăна çук-ши вĕсен йышĕнче? Çитĕннĕ çынсем, ачасем, костюмлисем, çарамассисем... Акă офицер тумĕллĕ хĕр. Унăн пакунсем те пур. Кунтах – тухтăр, тӳре-шара, байкерша, стюардесса, учительница... Китай, яппун, вырăс, кавказ, чăваш çыннисем. Хĕр-хĕрарăмăн тумĕ те расна. Ăстана чăн-чăн дизайнер тейĕн. Автор вĕсен капăрлăхĕ пирки те манман. Мĕнешкел ăсталăх, тӳсĕмлĕх, туйăмлăх кирлĕ-тĕр çак пĕчĕк теттесене тума! Йывăçран-ха тата. Вăт, чăнласах «ылтăн алăсем»!

Нумай халăх йывăçран пукане, тетте ăсталани паллă. Юмахра та ав Карло Буратинăна пуленккерен касса кăларать. Вăл, паллах, Воронков пуканинчен чылай пысăкрах. Пĕчĕккине каскалама та, сăрлама та, хитрелетме те чылай кăткăсрах. Апла пулин те маçтăр кун пирки: «Манăн чун ыйтни, йăпану вăл»,– тет. Йывăрлăх пирки вара пĕрре те асăнмасть. «Пĕр пуканене ăсталама 2 кун кирлĕ. Хушăран вара ĕçе эрнерен е уйăхран кăна вĕçлетĕп. Йăлтах кăмăлтан, хавхалануран килет. Халĕ манăн пурĕ 80 яхăн пукане»,– пĕлтерет Александр Владимирович.

Александр Воронков Комсомольски районĕнчи Çĕнĕ Кипеçре çуралса ӳснĕ. Ялти шкултан вĕренсе тухсан ашшĕ вырăнне кунтах ĕçлеме юлнă: физкультура предметне вĕрентнĕ. Çав вăхăтрах Шупашкарти И.Я.Яковлев ячĕллĕ пединститутра физвоспитани факультетĕнче куçăн мар майпа пĕлӳ илнĕ. Каярах, пĕлӳ çурчĕ хупăнсан вăл ĕççĕр юлнă. Кăштахран ялти ытти арçынпа пĕрле Мускава стройкăна ĕçлеме кайнă. 5 çул каялла вара ăна шăпи Етĕрне тăрăхне илсе çитернĕ. «Шкулта вĕреннĕ чухнех йывăçран тем те пĕр /çын кĕлеткине кăна мар, чĕр чунсене те/ каскалаттăм. Е йывăçа çунтарса эрешсем тăваттăм. Çĕнĕ Кипеçри пĕлӳ çурчĕ хупăнсан çур çула яхăн «биржăра» тăтăм. Çавăн чухне тепĕр хут йывăçпа аппаланма тытăнтăм. Вăхăта мĕнле те пулсан ирттермелле вĕт-ха. Пуканесене çăкаран /вăл çемçе йывăç/ касса кăларатăп. Хăшĕсене йывăçран та, пластмассăран та тăватăп. Касса кăларсан кӳлепене якататăп, акварельпе, кăранташпа, чĕрне сăрламалли лакпа пĕвететĕп. Вĕсем пурте – шухăшласа тупнă сăнарсем. Ахăртнех, пурнăçра та унашкаллисем пур»,– вăрттăнлăхне уçрĕ ăста. Ăсталăх вара ашшĕнчен куçнă пулĕ тесе шухăшлать. Владимир Викторович хăй вăхăтĕнче Шупашкарти пединститутăн ӳнерпе графика факультетĕнче пĕлӳ илнĕ. Александр Воронков пукане ăсталанисĕр пуçне кăранташпа портретсем ӳкерет. Çапла – ӳнерçĕ те, художник те, спортсмен та, гимнаст та вăл. Физкультурăна вĕрентнипе пĕрлех Етĕрнери ФСКра çăмăл атлетика секцине ертсе пырать. Кунсăр пуçне ачасене йĕлтĕрпе чуптарать, футболла, волейболла, баскетболла выляттарать. 2002 çулта хута кайнă шкулта спортзал та çĕнĕ йышши. Кăкшăмсем Етĕрнере, Çĕмĕрлере, Шупашкарта ирттерекен ăмăртусене тăтăш хутшăнаççĕ, яланах малти вырăнсене йышăнаççĕ. Сăмах май, Александр Владимирович Олимп чемпионĕпе Владимир Воронковпа хурăнташлă иккен. Кунта физкультура вĕрентмесĕр май та çук! Александр Воронков шкулта арçын учительсенчен пĕччен кăна юлнă пулсан та пурнăçне улăштарма шухăшламасть-ха. «Çын ĕмĕрĕпех Мускав тăрăх çӳреймест, тĕпленсе çемьепе пурăннине нимĕн те çитмест»,– тет.

Воронков хăйĕн ĕçĕсемпе курава пĕрремĕш хут хутшăннă. «Тĕрĕссипе, эпĕ вĕсене çынна кăтартма ăсталаман. Чун «тĕпренчĕкĕсене» хам валли кăна тунă. Мăшăрăм Нина ыйтнипе кăна килĕшрĕм. Юрĕ ĕнтĕ, манăн вăрттăнлăха пĕлчĕç. Халĕ ачасенчен, уйрăмах кĕçĕн классенче вĕренекенсенчен, канлĕх çук: вĕçĕмех пуканесене кăтартма ыйтаççĕ. Выставка вара килĕшрĕ. Уйрăмах «Мунча хыççăн» композици кăмăла килчĕ. Ăста /шел, ятне аса илейместĕп/ арçынпа хĕрарăма ман пекех йывăçран касса кăларнă». Александр Владимировичшăн пуканисем ахаль йывăç таткисем кăна мар, чунлă-туйăмлă «туссем».

Сергей Мышев Терентий Дверенин ăста пирки ӳкернĕ фильм аса килчĕ. Мучи йывăçран чăваш наци пуканисене касса кăларать. Унăн теттисем аваллăхран пулсан – Воронковăн вара паянхи саманарисем. Пурнăç пĕр вырăнта тăмасть, ялан аталанать. Культура та çĕнелсе улшăнать. Пуканесем те çĕнĕ сĕм илеççĕ. Çулсем иртеççĕ пулин те çын чунĕ тăтăш ачалăха таврăнать. Савăк çак туйăм чылайăшне «шедеврсем» тума хистет. «Мĕнле пукане пирки ĕмĕтленетĕп-ха? Пĕлместĕп те. Пуçа мĕн пырса «çапать» ĕнтĕ. Амазонка касса кăларас шухăш пур»,– йăлл! кулчĕ манпа сыв пуллашнă май Александр Владимирович.

■ **Роза ВЛАСОВА.**
Автор сăн ӳкерчĕкĕ

# Тĕллев – тепĕр çĕрте ĕçлĕ тăвасси

Госслужба занятости Чувашии

***Федерацин «Раççей Федерацийĕнчи халăх ĕçлевĕ çинчен» саккунĕн 7.1-1 статйипе килĕшӳллĕн халăха ĕçпе тивĕçтерекен центрсем ĕçсĕр граждансене тата вĕсен çемйисен членĕсене служба органĕсем янипе ĕçе вырнаçма тепĕр çĕре куçса каймашкăн пулăшаççĕ.***

2014 çулхи кăрлач уйăхĕнче Гайдар форумĕн пленарлă ларăвĕнче Раççей Правительствин Председателĕ Д.А.Медведев пĕлтернĕ тăрăх – ĕç вăйĕ çитмен тата унта пыракансене тивĕçлĕ вырăн туса пама пултаракан предприятисене куçса каякансене патшалăхăн хавхалантармалла, харпăр хăй ĕçне йĕркелемешкĕн, тепĕр специальноçа вĕренмешкĕн, вĕсене çĕнĕ тата пурнăç ыйтакан пĕлӳ илмешкĕн пулăшмалла.

Служба органĕсем Раççей Федерацийĕн ытти субъектĕнче ĕçлеме кăмăл тăвакансене чылайранпа пулăшаççĕ ĕнтĕ. Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх служби кун пек чухне ĕç шыраканпа ăна сĕнекен хушшинчи цивилизациллĕ хутшăнусен гаранчĕ пулса тăрать: çĕнĕ ĕç вырăнне хуçа шучĕпе организациллĕ майпа илсе çитерниччен, ĕç сыхлавĕ ыйтнипе килĕшсе тăракан хăрушсăрлăхлă условисем туса панинчен тытăнса шалăва вăхăтра тӳлесе тăрасси таранах.

Чăваш Республикин 2012-2020 çулсем валли йышăннă «Халăх ĕçлевне пулăшасси» патшалăх программипе килĕшӳллĕн республикăра пурăнакан 1115 çынна çуллен ытти регионта ĕç тупса памалла. 2013 çулта ĕçпе тивĕçтерекенсемпе çирĕплетнĕ килĕшӳсем тăрăх 1120 çынна йышăннă. Республика тулашне тĕпрен илсен çемье çавăрман, вăтам пĕлӳллĕ, рабочи професийĕ илнĕ çамрăксем тухса каяççĕ. Ытти çĕрте ĕçлемешкĕн вырнаçас тĕллевпе çула тухма хистенĕ сăлтавсенчен пĕри пурнăçланă ĕçшĕн укçапа тивĕçлипе хавхалантарнипе çыхăннă.

Раççей Федерацийĕн Правительстви хушнипе хальхи вăхăтра Сочи хулинчи олимп объекчĕсенчи ĕççене пурнăçлама кадрсем суйласа илессине тивĕçлипе хакласçĕ. Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх служби информаци Интернет-ресурсĕсенче унти объектсенчи вакансисем пирки туллин пĕлтернине, резюме формине, Сочи хулинчи Информаци центрĕн тата хăйсем тĕллĕн вырнаçас текенсене пулăшмашкăн ĕçпе тивĕçтерекенсен, кирлĕ документсене ярса памашкăн электрон адрессем йĕркеленĕ. Хыпарлава республикăра пурăнакансем хапăлласа йышăнчĕç, унпа 5,7 пин çын интереслесех паллашнă, сайта кĕрсе ĕç тупма пултарнисем те пур. Тĕслĕхрен, 2013 çулхи раштав уйăхĕнче асăннă хулари организацисенче 20-ĕн водителе вырнаçнă – вĕсем Олимпиадăна хутшăнакансене тата хăнасене транспортпа илсе çӳрĕç.

**Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх служби.**

*Хастар*

# Чунĕ уçă

***Самуккасси ялĕ Шупашкар районĕнчи Кӳкеçрен инçех мар вырнаçнă. Çак ялта çуралса ӳснĕ пĕр маттур çын çинчен каласа кăтартассăм килет.***

Валентин Серапионов 1949 çулхи çу уйăхĕнче çут тĕнчене килнĕ. Малтанах ялта вĕреннĕ, кайран Иккассинчи вăтам шкула утма тивнĕ. 8 класс хыççăнах «Звезда» колхозра плугарьте тăрăшма тытăнать. Çамрăк хăйĕн пултарулăхĕпе, шаннă ĕçе тĕплĕн пурнăçланипе ватă механизаторсене те тĕлĕнтернĕ. Кайрантарах ăна «Сельхозтехника» уйрăмĕнче сварщик вĕренекенне йышăнаççĕ. Туслă коллектив Валентина кĕçех Совет Çарне ăсатать. Чикĕ хуралне лекет. Заставăра çăмăлах пулман ял ачине. Ĕçпе пиçĕхнĕ çамрăка нимĕнле йывăрлăх та хăратайман. Кĕске хушăрах хăйĕн сăпайлăхĕпе, пултарулăхĕпе, çумри юлташ-салтаксене пулăшнипе, пограничник тивĕçне чыслăн пурнăçланипе палăрнă.

Тăван Самуккассине таврăнсанах малтанхи вырăнта – «Сельхозтехника» уйрăмĕнче – сварщикра ĕçлеме пуçлать. Пĕр-икĕ çултан Антонинăпа çемье çавăрать. Ялта ĕлĕкхи чăваш туйĕ кĕрлеттереççĕ. Икĕ ывăл çут тĕнчене килчĕç. Шел те, пĕр ывăлĕ сарăмсăр пурнăçран уйрăлчĕ.

Хĕрĕх çула яхăн «Сельхозтехникăра» комбайнсем юсакан цехра ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухрĕ. Çĕр-çĕр комбайн, трактор тата ял хуçалăхăн ытти техникине иккĕмĕш пурнăç панă. Тăвата çул Чăваш парламенчĕн, район тата поселок канашĕн депутачĕ пулнă. В.Серапионов III степень Ĕç Мухтавĕн орденне тивĕçнĕ. Диплом, Хисеп хучĕ пайтах.

Ял-йышра пысăк хисепре. Ялти субботниксене те йĕркелекенни вăлах. Кил-тĕрĕшре мĕн те пулин тумалла-и – пурте Валентина пулăшма чĕнеççĕ. Килĕнче карта тулли выльăх-чĕрлĕх, анчах вăл пĕр çынна та «Пыраймастăп пулĕ», – тесе хуравламан. Мĕншĕн тесен чунĕ уçă унăн.

■ **Николай ПОРФИРЬЕВ.**
Шупашкар районĕ



Экологи кăларăмĕ

# Çут çанталăк

Чĕр тавар

## Хыснана укçа кĕрет

*«Хыпар» ыйтăвĕсене республикăн çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министрĕ Иван ИСАЕВ хуравлать.*

**– Юлашки икĕ çулта çĕр айĕнчен чĕр тавар мĕн чухлĕ кăларнипе кăсăклантăм. 2012 çулта – 2,5 млн кубла метр. Ку 2011 çулхинчен 1,6 хут нумайрах. Пĕлтĕрхи калăпăш мĕнле?**

– Виçĕм çулхи шайрах, – терĕ Иван Васильевич.

**– «Чăваш Енре çĕр айĕнчи чĕр тавар сахал», – теççĕ. Çак сăмахсем чăнлăхпа килĕшсе тăраççĕ-и?**

– Пирĕн нефть, çут çанталăк газĕ, çĕр кăмрăкĕ, тимĕр тăпри, ылтăн, алмаз, апатит, кали тăварĕ, фосфорит е ытти пуянлăх çук. Анчах кирпĕч, черепица, керамзит çапмалли тĕрлĕ тăм, строительство хăйăрĕ, акшар çăнăхĕпе вĕтĕ чул хатĕрлемелли карбонат сийĕсем, трепел, гипс, ангидрид, хăйăр-грави хутăшĕ, торф нумай. Специалистсем вĕсен калăпăшне палăртнă. Пĕтĕм лаптăкăн 32% – тăм тата тăм-хăйăр хутăшĕ, 28% – хăйăр, 22% – торф, 1-ер% – ангидрид, гипс, трепел. Мĕн пур лаптăкăн 36%-чен чĕр тавар ăсатаççĕ. Ытларах хăйăр, тăм, карбонат хутăшĕ, гипс, торф, трепел каять.

**– Çĕр айĕнчи пуянлăх вырăнĕ миçе тата хуçисем камсем?**

– 176 лаптăк. 174-шпе – республика, 2-шпе /Çĕрпÿпе Улатăр районĕсенчи кĕленче тумалли хăйăр карьерĕсемпе/ федерацин Çĕр айĕнчи пурлăхпа усă куракан агентстви хуçаланаççĕ.

**– Чĕр тавартан тупăш мĕн чухлĕ илетпĕр?**

– Унран налук 2012 çулта республика хыснине 28,6 млн тенкĕ – 2011 çулхинчен 1,8 хут нумайрах – кĕнĕ. 2013 çулта 28,9 млн тенкĕ куçнă.

**– Чĕр таварлă лаптăксене кам валеçет?**

– Республикăн Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерстви. Малтан вĕсене тара парассине хаçатра пĕлтерет, унтан аукцион ирттерет. Аукциона ырлăх-пурлăх сутса тупăш курас текен предприятисем хутшăнаççĕ. Вырăншăн хăшĕ ытларах укçа тÿлет – вăл хуçа пулса тăрать.

**– Аукцион хăш çул чи нумай тупăш панă?**

– 2012 çулта. Çĕнтерÿçĕ предприяти бюджета Атăл леш енчи пĕр лаптăкшăн кăна 41,9 млн тенкĕ – 2011 çулхи тÿлеврен 49 хут нумайрах – куçарчĕ. Çав çул аукционра çĕнтернисем пурĕ 42 млн тенкĕ ытла куçарнă. Пĕлтĕр хыснана 6,3 миллион тенкĕ çеç кĕчĕ. Çуллен унта виçĕм çулхи пек хывайманстăн. Лаптăкшăн ытларах тÿлеттересси чылай сăлтавран, çав шутра мĕнле чĕр тавар пулнинчен, унăн хакĕнчен, лаптăк транспорт çулĕнчен миçе çухрăмра вырнаçнинчен нумай килет.

**– Юлашки вăхăтра хăш объекта алла патăр?**

– 2013 çулхи раштав уйăхĕнче «Энергосервис» общество Елчĕк районĕнчи Шăмалак ялĕ çывăхĕнчи строительство хăйăрĕн вырăнне темиçе çуллăха тара илчĕ. Уншăн çак уйăхра республика хыснине 14,1 млн тенкĕ куçарĕ. Чĕр таварпа усă курма ирĕк илессишĕн аукционра 9 предприяти тупăшрĕ.

**– Пăрачкав районĕнчи Пĕрремĕш Анастасово ялĕ çывăхĕнчен Мордва Республикине строительство материалĕ тума пин-пин тонна чĕр тавар турттарнине «Хыпарта» пĕрре çеç мар çырса кăтартнă. Ун пирки çĕннине мĕн пĕлтеретĕр?**

– Шахта хуçи «ГиПор-М» общество 2012 çулта 397,3 пин тонна гипспа ангидрид – 2011 çулхинчен 1,8 хут нумайрах – кăларнă. Кÿршĕ региона ăсатнă калăпăш пĕлтĕр виçĕм çулхи пекех.

Республикăра трепел саппасĕ пин-пин тонна. Унран ăшă сыхлакан çирĕп блок хатĕрлеççĕ. Кирпĕчрен темиçе хут пысăкрах çак материалпа çурта е хваттере шалтан пÿлеççĕ. Трепел выльăхшăн, кайăк-кĕшĕкшĕн – минерал удобренийĕ вырăнĕнче.

**– 2014 çул тĕлне чĕр тавар кăларма миçе предприятие ирĕк панă?**



– 56-шне. Пуянлăхпа усă курма – 76, вăл шутра строительство хăйăрĕ сутма – 31, тăм чавма – 23, карбонат турттарма 7 лицензи панă. 56 предприятирен хăшĕ-пĕри харăсах темиçе лицензиллĕ. Иртнĕ çул 13 лицензи уйăрнă тата 5 лаптăкпа усă курмалли тапхăра тăсса малтанхи лицензи вырăнне çĕннине çырса панă.

**– Министерство çĕр айĕнчи пуянлăха кăларакансенче тунă килĕшĕве татнă тĕслĕх пулнă-и?**

– Чĕр тавар унта палăртнинчен сахалрах кăларнăшăн, карьера вăхăтра ĕçе кĕртменнишĕн, техника документсем хатĕрлеменшĕн, килĕшÿре палăртнă ытти сăлтавшăн 2013 çулта 17 лицензие таварттартăмăр. Вара лаптăксемпе усă кураймарĕç. Аукцион ирттерсе вĕсене çĕнĕ хуçасене шанса парăпăр. Сăмахран, Çĕнĕ Шупашкарти строительство материалĕсен тата Ишлейри кирпĕч завочĕсем, «Эткер», «Энергосервис», «Трест-14» обществăсем илнĕ лицензин вăйра тăракан тапхăрне çирĕплетнĕ йĕркене шута хумасăр тунă йăнăша тÿрлетнипе çул-талăкласа чарса лартнă. Çав сăлтавсене пула «Арабоси», «Карьер», «Стройкомплект», «Труд», «Сурстройсервис», «Целолит», «Рим-1», «Бионикс» обществăсен, муниципалитетăн «Агрохимсервис» предприятийĕн, Вăрмар районĕнчи Энĕшпуç ялĕнчи кооператив лицензине туртса илнĕ.

**– Кашни район-хула валли хăйăр карьерĕ усрĕ-и?**

– Елчĕк, Патăрьел, Шăмăршă районĕсен валли пĕлтĕр Шăмалак ялĕ патĕнче лаптăк уйăртăмăр. Унтан кăсалхи утă уйăхĕччен турттарма пуçлĕç. Комсомольскисен пĕррехчĕ, кăçал тата иккĕшĕнчен кăларма лицензи илĕç. Ытти район-хулара та вырăнтан кÿрессĕ.

**– Правительство пуçлăхĕ Дмитрий Медведев хăвăрт çÿрекен пуйăсăн Мускав-Хусан маршрутĕн проектне пурнăçласшăн çĕр-шывшăн лайăхрах вăхăта – 2018 çул хыççăнхи тапхăра – хăварасшăн. Пĕлтерĕ пулин те чукун çул тума халех строительство материалĕ пăхса хуратăр-и?**

– Ăна республика лаптăкĕпе тăсма хăйăр, тăм, ытти стройматериал кирлĕ пулĕ. Чăваш Енре вăл ку патăх. Етĕрне, Муркаш, Шупашкар районĕсенчи хăйăр карьерĕсенчен тăм, хăйăр, ыттине кăларассине палăртрăмăр.

**– Министерство кăçал çĕр айĕнчи пуянлăха ĕçе кĕртес тĕлĕшпе мĕнле тĕллев лартрĕ?**

– Республикăна строительство хăйăрĕпе, тăмпа, торфпа, ытти материалпа лайăхрах тивĕçтерессишĕн чĕр таварăн çĕнĕ лаптăкĕсене валеçрĕр. Вĕсене тара пама пирвай 20-рен сахал мар аукцион ирттерĕпĕр. Çĕнтерÿçĕсем лицензи килĕшĕвĕнче асăннă тивĕçе еплерех пурнăçланине çирĕп тĕрĕслĕпĕр. Саккуна пăсса чĕр тавар кăларакана явап тыттарăпăр. Кун пек тĕслĕх пĕлтĕр Улатăр районĕнче шута илнĕ. Унпа çыхăннă тĕрĕслев материалĕсене Улатăрти полици пайне ярса патăмăр. Çĕр айĕнчи пурлăхăн çĕнĕ лаптăкĕсене те тĕпчĕпĕр.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ калаçнă**

Тĕс

## Ăтăр – юхан шыв илемĕ



*ЧР Сунарçăсемпе пулăçсен патшалăх службин тата сунар хуçалăх ĕçченĕсем 2012-2013 çулсенче юхан шыв ăтăрĕ /выдра речная/ Чăваш Енре еплерех ĕрченине тĕпченĕ.*

Ăна пĕлтĕр – 26, вăл шутра Пăрачкавпа Йĕпреç районĕсенче 11 тата 9 шута илнĕ. Кăштах хушăннă. Ÿсĕме шыв-шур маларахринчен тасараххипе, ăтăр апачĕ – пулă, çурăм шăммисĕр чĕрлĕх – ытларах хунанипе, этем таврари çемçе йывăçа сахалрах каснипе, хăнтăр пĕвеленчĕкĕсем хушăннипе ăнлантарчĕ.

Йĕпреçпе Пăрачкав тăрăхĕнчи чăтлăх-вĕтлĕхри вун-вун çăл куçран вăй илекен юхан шывсем нумай районти лапраллă-йăлмакаллă, ăшăх шыв-шуртан тасарах. Çав районсенчи вăрмана этем те сахалрах кĕрсе çÿрет. Ăтăр пулă лайăх ĕрчекен, хĕлле шăнман, вăрманти тăрă та тарăн юхан шыва килĕштерет. Юшкăн пăтранса варалаканнинче, йăлмалли-йÿлекеллинче нумай тăмасть.

Çăвăрсем çемьерен уйрăлсан апатлă, ирĕклĕ çĕнĕ хăтлăх шыраççĕ. Хăнтăрсемпе кÿршĕллĕ пурăнма та хирĕç мар. Лешсем ăвăса, хăвана, хурăна е йăмрана вуллинчен кăшласа тÿнтереççĕ, шыв тăрăх сĕтĕрсе пĕр çĕре пуçтараççĕ, пĕвеленчĕк умне юшкăн хăпартса майлаштараççĕ. Кусем кÿлленчĕк шывпа туласса кĕтсех тăраççĕ. Пĕрпĕринпе хирĕçмеççĕ, вырăн е апат пайламаççĕ. Вĕсен хирĕлме йÿтĕм çук. Хăнтăр – чĕрĕ турат-тĕретпе, ăтăр пулăпа, çурăм шăммисĕр кусан-çÿренпе тăранать. Вашмăк çыранри çемçе йывăççене касса е выльăха таптаттарса пĕтерсен, таврара этем сасси куллен тенĕ пек янраса тăрсан, çывăхра шапа-калта таврашĕ те пулмасан ăтăрсем хăтлăх, апат шырама урăх çĕре куçаççĕ.

Çурăмĕпе хÿри сăрă-хура çăмпа çÿхен те пĕр тан витĕннĕ йăпăрка тирлĕ. Хырăмĕпе ăмăрĕ çеç кĕмĕл тĕслĕ. Çитĕнсе çитнин тăршшĕ пуç тÿпинчен хÿри вĕçĕ таран 1,38 метр, 13,6 килограма яхăн таять. Ăтăрăн пурнăç тăршшĕ 10 çула яхăн. Хăлхисем кĕске, çăмĕнчен кăшт кăна вăрăмрах. Шыва чăмсанах сăмса тата хăлха шăтăкĕсене пĕрсе хуплать. Мăшăр виç-тăват çура çитĕнтерет.

Аçипе ами шыв айĕнчен çыран еннелле шăтăк чавса хăпараççĕ, нÿртен çÿлерехре, тăпра шăнман вырăнта, йăва тăваççĕ. Кĕме-тухма шыв хупламан çĕртен те шăтăк алтса унпа çыхăнтараççĕ. Шала тип курăк тултараççĕ. Яра куна йăвара ирттереççĕ. Çĕр каçиччен хăйсем пурăнакан тĕлтен юхан шыв тăрăх 2-18 çухрăма каяççĕ, çыранран тип çĕрпе 100 метр таран çитсе тĕрĕслеççĕ. Çĕнĕ шыв-шур шыраса хыçала 10-20 çухрăм хăвараççĕ, апат нумайрах тытсан пурăнма унтах юлаççĕ.

Ăтăр республикăра кăна мар, Раççейре те сахал. Чăваш Енре 1980 çулсенче – 10, 2007 çулта 30-35 шута илнĕ. Йывăç-тĕмсĕр, шыв-шурпа çыран чĕрлĕхĕ сайра пурăнакан лаптăк куллен вăтамран 2-5 килограмм пулă тата ытти апат çиекенскере тивĕçтермест. Вăл Улатăр, Йĕпреç, Çĕмĕрле, Пăрачкав, Куславкка районĕсенчи апатпа тулăх юхан шывсенче, этем хăйне хăратман хутлăхра, çеç ĕрчеет. Иртнĕ ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче Шăмăршă, Патăрьел, Комсомольски районĕсенче те çынна савăнтарнă.

Пирĕн юхан шывсем пурте тенĕ пекех хĕлле пăрпа витĕнеççĕ. Вĕсенче ăтăр пурăнаймасть. Хăнтăр çемйи сивĕре кунĕн-çĕрĕн йăвара тĕлĕрет пулсан ăтăр шывра пулă тытать, çыранра апат шырать. Хĕлле çывăрма вырмасть. Çавăнпа та ăна Чăваш Енре ĕрчеме йывăр.

Ăна валли апат çителĕклĕ шыв-шур сахал мар республикăра. Ĕрчеме чăрмантаракан тĕп сăлтав этемпех çыхăннă: тирĕшĕн браконьерсем тытаççĕ – йăх тăсма памаççĕ. Ăтăра хÿтĕлесен хĕлле шыв шăнман вырăнта час-часах куратăн. Иртнĕ ĕмĕрте ăна патшалăхăн Пăрачкав районĕнчи сунар саккаслăхĕнче ĕрчеме самай пулăшнă. Ăна салатрĕç те – ку ыйтупа ятарласа никам та ĕçлемерĕ. Чĕр чуна республикăра лайăхрах сарассишĕн ытти регионтан те кÿместпĕр. Çапла вара йыша çывăх çулсенче нумай ÿстерейменпĕр.

Хунаттармалли вырăн чылай: «Сăрçи» заповедникăн Улатăр вăрманĕпе хÿтĕлев унки, «Чăваш вăрманĕ» наци паркĕ, çут çанталăкăн Йĕпреç районĕнчи Пăкăян, Куславкка хули тĕлĕнчи, Атăл леш енчи, Илет юхан шывĕн саккаслăхĕсем, çут çанталăк палăкĕ шутланакан Паснапа Люля юхан шывĕсем. Шута ÿстерессишĕн пĕринче те ятарласа вăй хумастпăр. Ĕрчетме тĕллев те лартман. Хунама тĕрев парассишĕн хăш-пĕр шыв-шура кирлĕ пек гидромелиорацилемелле, Пăрачкав районĕнчи сунар саккаслăхне тавăрмалла. Ăтăра браконьертан хÿтĕлемелле, вăл пурăнакан шыв-шура шута илмелле, хăнтăр пĕвеленчĕкĕсене татса яма чармалла.

■ **Владимир НИКИТИН**

Тĕрĕслев

## Катăк çыран

Сăр юхан шывĕн сылтăм çыранĕнче, Етĕрне хулине çывăхри Куславкка ялĕпе çыхăнтаракан кĕпертен 800 метрта – «Сурстройсервис» обществăн стройматериал хумалли лаптăкĕ. Ăна баржăран хăйăр, вĕтĕ чул пушатса саппаслама тара илнĕ.

Сăрпа Атăл çыранĕнче юхан шыв транспорчĕпе турттарса килекен стройматериала купаламалли вырăн – тăршшĕпех. Федераци саккунĕпе килĕшÿллĕн лаптăкпа тирпейлĕ усă курмалла, çырана ватмалла мар. Обществăн строительство тата юхан шыв хăйăрĕ 50 пин кубла метрлăх тем хушăра катăлнă. Ăна ытлашшипех тиеттерсе янипе халĕ лаптăк хăйăр кăлармалли карьера аса илтерет. Росприроднадзорăн республикăри управленийĕ саккуна пăхăнманшăн предприятие административлă майпа айăплама – пысăк штраф тÿлеттерме – йышăнчĕ.

## Уя тăкнă

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Коминтерн» кооператив фермисенчен сысна, ĕне выльăх каяшĕ куллен нумай кăлараççĕ. Кунсăр пуçне чĕр кĕмĕллĕ электролампа, аккумулятор, трактор-автомашина çăвĕн, техникăн ытти хатĕрĕн каяшĕ сахал мар пухăнать.

Прокуратура ĕçченĕсем пĕрне те паспортизацилеменнине, каяш хăрушлăхĕн класĕсене çирĕплетменнине палăртрĕç. Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕр лаптăкĕнче иртен-çÿрене виççĕмĕш класлă хăрушлăха кĕртсе ÿкерекен выльăх каяшĕн купине асăрхарĕç. Саккуна пăсни пирки хуçалăхăн должноçри çынни тĕлĕшпе административлă ĕç пуçарчĕç, кооператив ертÿçинчен çитменлĕхе пĕтерме ыйтрĕç.

## Сиен кÿнĕ

«Юрма» агрохолдингăн кайăк-кĕшĕк фабрикин тислĕк тăкмалли лаптăкĕнчен пĕлтĕр Шупашкар районĕнчи Йăршу юхан шывне шĕвек каяш юхса аннă пирки çĕр-çĕр пулă наркăмăшланса вилчĕ. Çут çанталăка сыхлакан Шупашкар прокуратури çийĕнчех предприятие административлă кодексăн темиçе статйипе айăплама ĕç пуçарчĕ. Район сучĕ 2013 çул вĕçлениччен агрофирмăна 215 пин тенкĕлĕх штрафларĕ. Кунсăр пуçне тавралăха тăкак кÿнĕ общество тĕлĕшпе уголовлă ĕç те пуçарчĕç. Район сучĕ çывăх вăхăтра хăйĕн йышăнăвне пĕлтерĕ.

■ **Михаил ФЕДОРОВ**

Сунар

## Браконьер пĕтерет

*Эпĕ ял çыннисем: «Пирĕн тавралăх уй-хир, вăрман чĕр чунĕнчен чухăн», – тенине пĕрре çеç мар илтнĕ. Çывăхри катара е чăтлăхра чĕрлĕх сахаллишĕн килен-каян мар, ял-йыш яваплă.*

ЧР чĕр чун тĕнчин объекчĕсемпе вăл пурăнакан вырăнсене сыхлас, тĕрĕслес тата унпа усă курассине йĕркелес енĕпе ĕçлекен патшалăх службин хăй енчен республика чĕр чунпа пуянрах пултăр тесе ĕç нумай пурнăçлать. Пĕлтĕрхи раштав уйăхĕн 12-мĕшĕ тĕлне служба асăрхаттарнине юридици сăпачĕсем вăхăтра шута илменшĕн, сунар хуçалăхне тытса тăмалли йĕркене пăснăшăн, чĕрлĕх ĕрчекен вырăна сиен кÿнĕшĕн, сунара çÿремелли, чĕр чуна тытмалли йĕркене пăхăнманшăн – 166, çав шутра юридици сăпачĕ тĕлĕшпе 7 протокол çыртăмăр.

Етĕрнери «Агропромстрой», «Вăрмарти электричество сечĕсем» обществăсенчен юпасем çинчи электроçыхăнăва ятарлă хатĕрпе сиенсĕрлетме ыйтрăмăр. Шел те, асăрхаттарăва ним вырăнне те хумарĕç. Ток вĕçен кайăка çав-çавах сăтăр кÿчĕ. Иккĕшĕн директорне те административлă майпа штраф пама йышăнтăм.

Вĕçен кайăка электричествăран хÿтĕлес тĕлĕшпе виççĕмĕш çул ĕçлетпĕр. Улатăрсен электроçыхăнăвĕ ăна пысăк тăкак кÿнине палăртрăмăр. Вырăнти предприятирен юпасем çине кайăка сиенсĕрлетмелли хатĕр вырнаçтарма ыйтрăмăр. Ку ĕç хушма тăкак кÿрет пулин те – çирĕплетрĕç. Вăл ытти районта та малалла пырать.

Чĕр чун тытма службăран ирĕк илмесĕр, сунар билечĕсĕр уй-хирте е вăрманта пăшал çакса çÿрени час-часах тĕл пулать. Кунашкал тĕслĕх – административлă кодекспа айăпланисен 70%. Авто- тата мототранспортпа, кимĕпе, юр ашанпа пынă чухнех пăшала йĕнĕрен кăларнă тĕслĕхе тăрă шыв çине кăлартăмăр.

Сунарçăсем çĕрле автомашина фарипе инçете çутатса, мулкача хăратса хÿтлĕхрен кăлараççĕ. Кăçал пĕри юр ашанпа Етĕрне районĕнче куяна хăваланă, пăшалран пенĕ. Пирĕн инспектор протокол çырнă хыççăн следователь уголовлă ĕç пуçарчĕ. Шел те, айăпланакан преступление йышăнмарĕ. Вăл пенине никам та курман пирки явап тыттармарĕç.

Хăшĕ-пĕри хĕç-пăшала полици пайĕнче шута илтермест, сунар объектне кĕмен чĕр чуна тытать. Республикăн Хĕрлĕ кĕнекине кĕртнĕ тĕпеклĕ чăмкăça /чомга/, шурлăх тăманине /сова болотная/ вĕлернине çирĕплетме май килчĕ. Кăçал административлă кодекса ик хут пăснăшăн темиçе кайăкçăран сунар правине çулталăклăха туртса илме йышăнтăм. 13 пăшалпа капкăна, сунарçăн чĕр чун тытмалли ытти хатĕрне вăхăтлăха, суд йышăнăвĕпе килĕшÿллĕн 5 пăшала, хир сыснине «серепене» çаклатмалли 3 майкăча яланлăхах конфискациленĕ. Сунар йĕркине пăснă пирки уголовлă ĕç пуçарма полици пайне 6 материал ярса патăмăр. Браконьерсем сунар хуçалăхне 395 пин тенкĕлĕх сиен кÿчĕç. Вĕсене административлă майпа 248,3 пин тенкĕлĕх штрафларăмăр.

Сунар йĕркине пăсакансене тăрă шыв çине кăларассишĕн службăн Шупашкар, Етĕрне, Канаш, Çĕмĕрле районĕсенчи инспекторĕсем Константин Горшков, Сергей Карпунин, Евгений Краснов, Владимир Бельцов çине тăрса ĕçленине палăртас килет.

■ **Владимир КУЗЮКОВ, служба ертÿçи**

Сыхлав

## Хăратакан пайтах

*Элĕк районĕнчи Шуркасси Юнтапа ял тăрăхĕнче темиçе çул каялла хăнтăрсен виçĕ çемйиччĕ. Халĕ мĕн куратпăр-ха?*

Пĕрремĕшĕ Вырăс Сурăм ялĕнчен инçе мар – Вутлан юхан шывĕн кăкĕнче. Шкулти экологи-тавра пĕлÿ кружокне çÿрекенсем унта пĕлтĕрхи юпа уйăхĕнче пулчĕç, шăлламассен пурнăçĕпе кăсăкланчĕç. Вĕсем айлăм-тайлăмри çывăхри çемçе йывăç-тĕме тахçанах кăшласа тÿнтернĕ: пĕр пайĕ Вутлана пĕвелеме кайнă, теприн туратне çисе янă.

Вĕренÿ программипе килĕшÿллĕн эпĕ хăнтăрсен пурнăçĕпе паллаштарма Сурăм юхан шывĕн /вăл Муркаш, Элĕк, Вăрнар районĕсем тăрăх юхать/ Вутлан пырĕ патне ачасене темиçе те ертсе кайнă. Унăн юхлăхне хăнтăрсем йышăннă хыççăнах хушлăхра ăвăс, хăва, йăмра, хурăн çырма тăршшĕпех ÿсетчĕ. Иртнинче пăхрăмăр та – чĕр чунсен пурнăçĕ йывăрланнине сисрĕмĕр. Çывăхри йывăç-тĕме пĕтĕмпех расхутланă. Вĕсен апат шырама инçерех кайма тивет. Кун пек чух çул çинче хăрушлăх сиксе тухасси пур.

«Пĕвеленчĕк çирĕп, унăн умне кăштах юшкăн хăпартнă, унпа хутăш çирĕпленнĕ çатра шыва лайăх тытать. Пĕвеленчĕке юсасах тăнă, – пĕтĕмлетрĕмĕр ачасемпе. – Çăмламассем çыранра йĕр хăварнă». Çамрăк экологсем пĕвеленчĕк çирĕплĕхне тĕрĕслерĕç. Браконьерсем чĕр чунсене тытса миххе чикме хăтланнă. «Ашĕ тутлă, тирĕ хаклă», – теççĕ. Телее, «серепене» çаклатайман. Касу пăхакансем йăва патне пымасăр ешĕл курăклă лаптăк тупаймаççĕ-ши? Хăнтăр «килĕ» патĕнче хăйне евĕрлĕ шăрш выльăхран çеç мар, этемрен те юлать. Вăл хăнтăрсене хăратать.

Хĕл каçма шăтăк алтса йăва туни палăрчĕ. Унта шыв айĕпе ăтăр пекех кĕреççĕ. Те çывăхра йывăç-тĕм çукран, те çынран шикленсе Вутлан çинче турат-теретрен «пÿрт» хăпартман. Ытти çĕрти хăнтăрсем ăна шыв шайĕнчен 2-2,5 метр таран çатрака купаласа çĕклеççĕ. Варринче йăва валли пушă вырăн хăвараççĕ. Унта пĕвеленчĕк тĕпĕнчен апат хăпартма «тĕп сакайĕнчен» шыва чăмаççĕ. Юр хупланăран вăл хĕлĕпех шăнмасть.

Пĕчĕк турат 5-7 хăнтăршăн чун усрамалăх çеç. Сивĕ уйăхсенче вăл ытлашши кирлĕ мар.

«Вутлан хăнтăрĕсем кăçалччен пурăнма мехел çитерчĕç-ха», – тесе тĕлĕнеççĕ çынсем. Çу каçайĕç-ши? Е браконьер, е чĕр чун уссине пач ăнланман этем инкек кăтартасран хăратпăр.

Тепĕр çемье Чăрăшкасси ялĕн çырминчеччĕ. Ахăртнех, вăл – Вутланран куçса пынисен тăсăмĕ. Кĕске хушăра пĕвеленчĕк турĕç, хĕл каçма шăтăк чаврĕç. Шел, çултан çывăхра тĕпленнĕрен, çынсем пĕрмай хăратнăран унта нумай пурăнаймарĕç.

Анаткас Сурăм ялĕ патĕнче – виççĕмĕшчĕ. Пĕвеленчĕклĕ-йăваллăччĕ. Часах ялсенче: «Хăнтăрсене браконьерсем тытнă!» – текен сас-хура сарăлчĕ. Унтанпа вĕсем шывра шăмпăлтатнине никам та илтмен.

ЧР Сунарçăсемпе пулăçсен патшалăх службин иртнĕ кĕркунне республикăра – 1934, çав шутра Улатăр районĕнче – 391, Йĕпреç тăрăхĕнче – 229, Пăрачкав енре – 249, Çĕмĕрле тавращĕнче 176 хăнтăра шута илнине, виçĕм çулхинчен кăштах хушăннине пĕлтерчĕ. Çут çанталăк тусĕсене ку хыпар савăнтарчĕ.

Хăнтăр ял-хуларан инçетри, вăрман варринчи шыв-шурта çеç мар, ял тăрăхĕсенчи йывăç-тĕмлĕ çырма-çатрара та ĕрчеет. Çакна Аркадий Айдак ертсе пынă Етĕрне районĕнчи «Ленинская искра» колхозăн ырă тĕслĕхĕ лайăх çирĕплетет. Унти сип-симĕс çырма-çатрара, пĕвесенче тĕрлĕ чĕр чун, çав шутра хăнтăр та ĕрченĕ.

■ **Эльвира АФАНАСЬЕВА, Шуркасси Юнтапа шкулĕн аслă категориллĕ вĕрентекенĕ**

Хăтлăх

## Чĕрĕ пуянлăха упрар

*Чăваш Енре – çут çанталăкăн уйрăмах сыхлакан республика шайĕнчи 95 лаптăкĕ /48 пин ытла гектар/.*

Юлашкинчен Куславкка районĕнчи Куснар ялĕн çăл куçне шута кĕртрĕмĕр. Вăл пахине техника тĕпчевĕсен центрĕ çирĕплетрĕ. Районти Журчиха юхан шывĕ çумĕнчи тайлăма та патшалăх хÿттине илме ыйтаççĕ. Эпĕ кунта иртнĕ çул пултăм, биотĕрлĕлĕхе тишкертĕм. Айлăм курăк-чечекпе, хурт-кăпшанкăпа, вĕçен кайăкпа пуян. Республикăн Хĕрлĕ кĕнекине кĕртнĕ пĕчĕк ăмăрт кайăк /орел-карлик/, сăпса çиен /щурка золотистая/, хыркук /удод/, Хĕрлĕ кĕнекен хушăмĕнчи путене /перепел/, карăш /коростель/ ман умранах вĕçсе иртрĕç. Саккун хÿтĕлекен ÿсентăранран 22 тĕс, çав шутра саранка лили, Вальдштейн суханĕ, çемçе медуница çеçкене лараççĕ.

Патшалăх çут çанталăкăн уйрăмах сыхлакан территорине хÿтте илнине çирĕплетекен хăма лаптăксен 70 процентĕнче, вăл шутра пĕлтĕр 23 вырнаçтарнă. Кăçал 12 çирĕплетме пăхрăмăр. Çынсем вĕсем çине çырнипе паллашса хÿтлĕхре пăшалпа, йытăпа, сунарăн ытти хатĕрĕпе çÿреме, çĕре сухалама, тăпрана бульдозерпа хыртарма, тиесе кайма, территорие автотранспортпа кĕме юраманнине пĕлеççĕ. Хăтлăхри йывăç-тĕме касма, кăларса кайма, вăрманта, уйхирте вут чĕртме, хăш-пĕр лаптăкра утă çулма, территорисен пысăкрах пайне кĕтÿ кĕртме чарнă. Йĕркене пăхăнманшăн административлă майпа айăплаççĕ: штраф тÿлеттереççĕ.

Лаптăкри йывăç-курăка, чĕр чуна ан тĕкĕнĕр. Вĕсем республикăн çут çанталăкне пуянлатаççĕ. Вăхăт иртнĕçемĕн хÿтлĕхрен юнашар çĕре куçса тавралăха илемлетĕç. Шухăшăма çирĕплетме тĕслĕх илсе кăтартатăп. Республика Правительстви хăй вăхăтĕнче Шупашкар тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенче сăрă чарлансене хÿтĕлес тĕллевпе Шомик тата Водолеево саккаслăхĕсем йĕркеленĕ. Пĕрремĕш – 47, иккĕмĕш – 152 гектар. Вĕсем республикăра çав кайăксене ĕрчеме нумай пулăшрĕç.

Часах кĕтÿ пысăкланчĕ. Çулсем иртнĕçемĕн 7-8 ушкăна пайланчĕ. Кайăксен уйрăлса тухнă ушкăнĕсем Сăр тăрăхĕнче, Вăрнар районĕнче, ытти çĕрте тĕпленчĕç. Вĕсене пăхса çынсем савăнаççĕ. Республика лаптăка хÿтте илмен пулсан йыш ÿсместчĕ.

Федерацин тата республикăн çут çанталăкăн уйрăмах сыхлакан территорийĕсем çинчен калакан саккунĕсене лаптăксенче еплерех пăхăннине ЧР Çут çанталăк тата экологи министерствин дирекцийĕ тĕрĕслесе тăрать. Çуллен 40-45 территорие тĕпчетпĕр. Ытларахăшĕнче саккуна пăхăнаççĕ. Çапах та хăшĕ-пĕринче пăсаççĕ. Уйрăммăн илсен хÿтлĕхе йăларан, производствăран тухакан хытă каяша тăкнине сивлес килет. Сăмахран, Красноармейски районĕнчи Карай ял тăрăхĕнчи Кÿл хĕрринче çÿпçап сапаланнине асăрхарăм. Ăна пуçтарса тиесе ярас ыйтупа ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе калаçрăм. Вăл субботник йĕркеленĕ, унта администраци, клуб ĕçченĕсене явăçтарнă. Çырусем çырмасăрах Кÿл хĕррине тирпейлерĕç.

Министерство иртнĕ çул ятарласа укçа уйăрса 13 территори биотĕрлĕлĕхне тĕпчеттерчĕ. Ку ĕçе 4 ăсчаха явăçтарчĕ. Эпĕ те хутшăнтăм. Пĕтĕмлетĕве министерствăна тăратрăмăр. Çут çанталăк пуянлăхне упрас, тĕпчес тĕлĕшпе ĕç пурнăçласси пирки сĕнÿсем хатĕрлерĕмĕр. Кăçал ăсчахсен ушкăнне 5 лаптăкри биотĕрлĕлĕхе тĕпчеме май туса парăпăр.

**В.А.Яковлев 1968 çулта Шупашкар районĕнчи Çĕньялта çуралнă. 1985-1992 çулсенче Симферопольти патшалăх университетĕнче вĕреннĕ, биолог специальноçне алла илнĕ. Ĕç биографине 1992 çулта Чăваш наци музейĕн сотрудникĕнчен пуçланă. Çут çанталăка тĕпчекен ача-пăчан Шупашкарти «Карăш» клубĕнче педагогра, республикăри ачасемпе çамрăксен туризм, тавра пĕлÿ, экологи центрĕнче, тĕп хулан çут çанталăка хÿтĕлес енĕпе ĕçлекен комитечĕпе управленийĕнче, 2009 çултанпа республикăн уйрăмах сыхлакан территорийĕсен дирекцийĕнче вăй хунă. Иртнĕ çулхи юпа уйăхĕнчен – дирекци ертÿçи.**

■ **Владимир ЯКОВЛЕВ, дирекци ертÿçи**

**Кăларăма Юрий МИХАЙЛОВ хатĕрленĕ.**

*Çулталăк пĕтĕмлетĕвĕ*

# Чемпионсен каçĕнче – чи пултаруллисем



*«Росинка» физкультурăпа сиплев центрĕнче ЧР Физкультурăпа спорт министерствин 2013 çулхи ĕçĕ-хĕлне пĕтĕмлетнĕ. Çак сăлтавпа унта «Чемпионсен каçĕ» иртнĕ. Уява республикăри чи паллă спортсменсем, вĕсен тренерĕсем, ветерансем, спорт учрежденийĕсемпе федерацийĕсен ертӳçисем хутшăннă.*

Спорт хастарĕсене Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев саламланă. «2013 çул спорт пулăмĕсемпе пуян пулчĕ. Акă пĕрремĕш хут республикăра Универсиадăпа Олимпиада çулăмĕсен эстафетисем иртрĕç. Пирĕн спортсменсем çĕр-шыв тата тĕнче ăмăртăвĕсенчен чылай çитĕнӳпе таврăнчĕç. Чи пĕлтерĕшли – Чăваш Енре спортпа туслисен йышĕ ӳсни, мĕншĕн тесен спорт отраслĕнче профессионалсем ĕçлеççĕ. Олимп çулталăкĕнче те пысăк çĕнтерӳсемпе савăнтарасса шанатăп», – тенĕ вăл хăйĕн сăмахĕнче.

Михаил Васильевич Етĕрнери ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн тренер-преподавательне Зиновий Неопалимские «Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ тренерĕ» ят панине ĕнентерекен удостоверенипе тата Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă спорт шкулĕн тренер-преподавательне Галина Маловăна РФ Олимп комитечĕн дипломĕпе чысланă. Çавăн пекех уявра ЧР Пуçлăхĕ Чăваш Республикин патшалăх влаç органĕн тата вырăнти хăй тытăмлăх ĕçченĕсен спартакиадин çĕнтерӳçисемпе призерĕсене те парнесемпе савăнтарнă. Ăмăртусен пĕтĕмлетĕвĕпе ЧР Пуçлăхĕн Администрацийĕн, ЧР Физкультурăпа спорт тата Финанс министерствисен командисем, Шупашкар хула, Вăрнар тата Канаш районĕсен ĕçченĕсем малти вырăнсене йышăннă.

Чемпионсен каçĕнче чи лайăх спортсменсемпе тренерсене те палăртнă. Вĕсен йышĕнче – Италире иртнĕ хĕллехи Универсиада чемпионки, бронза призерĕ Татьяна Семенова биатлонçă тата унăн тренерĕ Анатолий Акимов, çуллахи Универсиадăра икĕ «кĕмĕл» çĕнсе илнĕ Алина Прокопьевăпа /çăмăл атлетика/ унăн тренерĕ Михаил Кузнецов, студентсен ăмăртăвĕн «бронза» призерĕ Екатерина Краснова /ирĕклĕ мелпе кĕрешессi/ тата РФ спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ Олимпиада Иванова. Адаптивлă спорт лауреачĕсем: Сурдлимп вăййисенчен медальсемпе таврăннă Андрей Андреев, Иван Пакин /çăмăл атлетика/ тата Анастасия Седова /бадминтон/. Вĕсен тренерĕсем Валерий Васильев, Светлана Морозова, Надежда Тонина – чи пултаруллисем. Çамрăк спортсменсен йышĕнче хăвăрт утас енĕпе Европа чемпионки тата çĕр-шыв рекордсменки Светлана Васильева, тĕнче ăмăртăвĕсен çĕнтерӳçисем Ирина Баймулкина /йывăр атлетика/ тата Максим Иванов /самбо/ палăрнă.

■ А.МИХАЙЛОВ

*Истори*

# Шурă Олимпиада – тăхăр вуннăра

## 2. Çĕр-шыв чысне хӳтĕлесе

***1956 çул Совет Союзĕн спорт историйĕнче паллă йĕр хăварнă. Çĕр-шыври халăхсен пĕрремĕш спартакиадин финалĕ Мускава чи пултаруллă спортсменсене пухнă, Мельбурнти Олимпиадăна кайма тивĕçлисене суйласа илнĕ. Çав çулах кăрлачăн 26-мĕшĕнчен пуçласа нарăсăн 5-мĕшĕччен Италире хĕллехи VII Олимп вăййисем иртнĕ.***

Шăпах çав Олимпиадăра СССР спортсменĕсем пуçласа хĕллехи ăмăртусене хутшăннă. Вăтăр ытла çĕр-шывран пухăннă 821 олимпиец хушшинче вĕсем пуринчен те ытларах медаль çĕнсе илсе командăсен ăмăртăвĕнче пĕрремĕш вырăн йышăннă. Иккĕмĕшĕнче – Австри, виççĕмĕшĕнче – Финлянди. СССР командине пĕрремĕш «ылтăна» Л.Козырева парнеленĕ. Кăрлачăн 28-мĕшĕнче хастар йĕлтĕрçĕ 10 çухрăма чупса çĕнтернĕ. Эстафетăра Ф.Терентьев, П.Колчин, Н.Аникин, В.Кузин мала тухса савăнтарнă. Конькипе ярăнса ăмăртнă çĕрте те совет спортсменĕсене ăнăçнă. Б.Шилков 5000 метрлă дистанцире çĕнтернĕ. Унччен Е.Гришинпа Ю.Михайлов 1500 метра пĕр ушкăнта чупман пулин те пĕр пек кăтартупа палăраççĕ. Иккĕшĕ те Олимп чемпионĕн ятне тивĕçеççĕ! Хоккеистсем те Италирен ылтăн медальсемпе таврăнаççĕ.

Пуçламăшĕ пурне те хавхалантарнă. Иккĕмĕш хут кĕрешĕве тухсан та /1960, Скво-Вэлли, АПШ/ СССР команди малти вырăна йышăнать. Команда чысне çӳле çĕклекенсем: М.Гусакова йĕлтĕрçĕ, конькипе чупакансем Е.Гришин, В.Косичкин, Л.Скобликова, К.Гусева. Тепĕр тăватă çултан та /1964, Инсбурк, Австри/ Челябинскри 25 çулти Лидия Скобликова «ылтăнпа» савăнтарать: тăватă дистанцире çĕнтерет. Пĕрлештернĕ командăна каллех /виççĕмĕш хут/ пĕрремĕш вырăна тухма, паллах, ытти спортсмен та пулăшнă. Вăл шутра – хоккеистсем те.

1968 çулхи Олимпиадăра, Францири Гренобльте, СССР команди иккĕмĕш вырăн йышăнать. Кунти старта тухнисен хушшинче пирĕн ентеш 24-ри Владимир Воронков та пулнă. Комсомольски районĕнчи Тукай ялĕнче çуралнă, каярахпа Канаша куçса килнĕ йĕлтĕрçĕ Владимир Григорьев тренер пулăшнипе ăсталăхне çулран çул ӳстерсе пынă. Çарта службăра тăнă чухне вăл Мускав командишĕн ăмăртма тытăннă. Гренобльте Воронков 30 çухрăма тăваттăмĕш чупса тухнă, эстафетăра та юлташĕсемпе пĕрле çав вырăнах йышăннă. Çулсем иртнĕ май хăйне ытти ăмăртура та тĕрĕсленĕ Воронков. Çĕр-шыв командишĕн чупса вăл 1970 çулта тĕнче чемпионĕн ятне тивĕçет. Тата тепĕр икĕ çултан Саппорори /Япони/ Олимпиадăра пысăк çитĕнӳпе савăнтарать: эстафетăра – ылтăн медаль!

СССР спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ Владимир Воронков Чăваш Енпе çыхăнăва татмасть. Халĕ вăл отставкăри полковник, Мускав облаçĕнчи Одинцово хулинче пурăнать. Нумай пулмасть Шупашкара олимп çулăмĕн эстафетине хутшăнма килнĕччĕ.

Олимпиадăсенче пирĕн çĕр-шывăмăр спортсменĕсем ытти çулта та ырă ята тивĕçнĕ. 1970-1990 çулсенче вĕсем вăйлисемпе пĕр тан кĕрешнĕ. Кам илтмен пулĕ Александр Тихонов биатлонçă, Галина Кулакова йĕлтĕрçĕ, Людмила Пахомова, Александр Горшков, Ирина Роднина фигуристсен ячĕсене? XIV Олимпиадăра /Сараево, Югослави/ çĕр-шыв командинче Çĕнĕ Шупашкарти спорт шкулĕнче ăсталăхне туптанă Надежда Бурлакова /Шаманова/ та ăмăртнă. 10 çухрăмлă дистанцие тăххăрмĕш чупса тухнă, йĕлтĕрçĕсен эстафетинче командăри юлташĕсемпе тăваттăмĕш вырăн йышăннă.



*● СССР спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ, Олимп чемпионĕ Владимир Воронков /1972 çул/.*

Сочири вăйăсем умĕн иртнĕ Олимпиадăсен паттăрĕсене, командăсен çитĕнĕвĕсене тепĕр хут аса илни вырăнлах пулĕ. Çирĕм çул каярах /Совет Союзĕ саланнă хыççăн/ Раççей Федерацийĕ çĕр-шывсен хушшинче хăй уйрăм командăпа ăмăртма тытăннă. Ун пирки – çитес номерте.

■ Юрий ПЛОТНИКОВ, спорт журналисчĕ

# Çăмăл атлетика

Мускавра пĕр тăван Знаменскисен ячĕллĕ манежра хăвăрт утас енĕпе хула чемпионачĕ иртнĕ. Çавăн пекех унта 23 çула çитмен çамрăксем, юниорсем, яшсемпе хĕрсем нумай енлĕ кĕрешӳре вăй виçнĕ. Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 8-мĕш спорт шкулĕн вĕренекенĕ, Раççей спорт мастерĕ Алексей Архипов /тренерĕ Дмитрий Лисканюк/ 5000 метрлă дистанцие 20,59 минутра вĕçлесе кĕмĕл медаль çĕнсе илнĕ.

# Самбо

Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă спорт шкулĕнче республикăри чи паттăр арçынсем Чăваш Ен чемпионĕн ятне тивĕçессишĕн тупăшнă. Кавир çине 100 яхăн самбист тухнă. Хăйсен виçисенчи спортсменсене парăнтарса Олег Петров, Алексей Илларионов, Николай Лапшин, Кирилл Маркин, Роман Матвеев, Олег Воробьев пьедесталăн чи çӳлти картлашки çине хăпарнă.

■ А.МИХАЙЛОВ

# Унра – иксĕлми вăй-хал



***Çакăн пек çынсем пирĕн хушăра пурри малашлăха çутă сăрăсемпе ӳкерме хистет. Вăрнар районĕнчи Пăваялĕнче пурăнакан Анна Пескова кун-çулĕнче ырри çеç мар, усалли те сахал мар пулнă. Апла пулин те вăл нихăçан та пуçне усман, ыттисене хавхалантарма мехел çитернĕ. Çавăнпах-тăр вăл ял-йыш, кӳршĕ-аршă хисепне çĕнсе илнĕ.***

Ял тăрăхĕн администрацийĕнче ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнăскер паян та ял нушипе пурăнать. Пăваяль старостине суйланă ăна. Вăл ертсе пынипе ялта çулсерен вун-вун ĕç пурнăçланать. Урамсене тирпей-илем кĕртмелле-и, масар карти тытмалла-и тата ытти ĕç тумалла-и – Анна Федоровна кирек хăçан та малта. Администраци ĕçченĕсем те унпа канашласа тĕрлĕ йышăнăва çирĕплетеççĕ.

Анна Федоровнăн урисем ыратаççĕ, утса çӳреме те йывăр ăна. Çапах та хуçалăхĕ çирĕп унăн. Картиш тулли выльăх-чĕрлĕх усрать: ĕне, сурăх, кайăк-кĕшĕк... «Хушма хуçалăх аванах тупăш парать», – тет вăл. Анна Федоровна çамрăклах мăшăрсăр юлнă. Икĕ хĕрпе пĕр ывăл ӳстернĕ. Ачисем тахçанах тăван килтен вĕçсе тухнă, хăйсем те çемьеллĕ. Хальхи вăхăтра Анна Федоровна усрав ывăлĕпе Федьăпа, Вăрнарти ял хуçалăх техникумĕнче вĕренекенскерпе, пурăнать. Тăван пиччĕшĕн ачине ултă çулта чухне хăйĕн хӳттине илнĕ вăл.

А.Пескова пушă вăхăтра та алă усса лармасть. Сăвă, ял пурнăçне сăнлакан статьясем çырать. Вĕсене район хаçатĕнче пичетлет. Тĕрлĕ япала çыхать, тĕрлет, туй арăмĕсен тумĕсене илемлетет. Тĕреллĕ сăмса тутрисене тăванĕсене, юлташĕсене, пĕлĕшĕсене парнелет. Купăсне тăсса ярать те – ши-ши! шăхăрса такмакласа юрлать. Чăтса тăраймăн – ирĕксĕрех ташша ярăн!

Анна Федоровна – этем вăй-халне, çирĕплĕхне, хастарлăхне туллин кăтартакан чĕрĕ тĕслĕх.

■ И.СЕРГЕЕВА

# Ĕç планĕ хатĕр

***Чăваш наци музейĕнче ЧНК президиумĕн ларăвĕ иртрĕ. Унта çулталăкри ĕç планне пăхса тухса çирĕплетрĕç.***

Район-хуласенче ЧНК уйрăмĕсене йĕркелес юхăм иртнĕ çул вĕçĕнче тапранчĕ. Тĕслĕх кăтартакансем Красноармейскисем пулчĕç, вĕсем раштав уйăхĕнче хăйсен уйрăмне туса хучĕç. Президиум членĕсем республикăри ытти районта çак ĕç-хĕле пĕрремĕш кварталта вĕçлеме, ака уйăхĕнче уйрăм ертӳçисемпе тĕл пулма, семинар ирттерме калаçса татăлчĕç. Чăвашлăхшăн ĕçлеме хатĕр кирек кам та ЧНК членĕ пулма пултарать. Район-хулари уйрăмсене заявлени çырмасăр йышăнаççĕ.

Çулталăк планĕнчи паллăрах пулăмсен шутĕнче: ЧНК Мăн Канашĕн çĕртмен 22-мĕшĕнче ирттерме палăртнă ларăвĕ тата Чăваш наци конгресĕн черетсĕр IX съезчĕ /çĕртме, 23/. Çав кунсенчех Акатуй иртĕ. И.Я.Яковлев çутта кăларуçă, А.Г.Николаев космонавт летчик çуралнă тата вилнĕ кунсенче Шупашкарта, ентешĕмĕрсен тăван тăрăхĕсенче пысăк мероприятисем йĕркелĕç. Çавăн пекех чăваш халăхĕн ытти паллă çыннин юбилейĕсене те сумлăн уявлĕç. Йăлана кĕнĕ ытти мероприятие те /тĕслĕхрен, «Кĕмĕл сасă» фестиваль/ плана кĕртсе хăварчĕç.

Республика тулашĕнче пурăнакан чăвашсемпе йĕркеленĕ çыхăну та татăлмĕ. Вăл çирĕпленсе, аталанса пырĕ. Йăхташăмăрсем патне наци вĕренӳ кĕнекисене çитерессине те ЧНК хăй çине илме палăртрĕ. Конгресс хастарĕсем аякри тăвансен пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе паллашма Пушкăртстана, Тутарстана, Самар облаçне, Красноярск крайне, Иркутска тата ытти тăрăха çитсе килесшĕн.

ЧНК хастарĕсем ял тăрăхĕсен старостисем урлă халăхпа тачă çыхăну йĕркелеме, пĕрлехи ĕçе тухăçлă пурнăçлама май пуррине шанаççĕ. Çитес вăхăтра вĕсемпе канашлу йĕркелесшĕн.

Палăртса хăварар: Чăваш наци конгресĕн çулталăкри ĕç планĕпе www.chnk.ru сайтра туллин паллашма май пулĕ.

■ Валентина БАГАДЕРОВА

*Çĕнĕ кĕнеке*

# Шухăшсен авăрĕнче...

***Анатолий Кибеч – халăх тахçанах хисеплекен çыравçăсен шутĕнче. Унăн юррисене ватти-вĕтти юратса шăрантарать, хайлавĕсене килĕштерсе вулать. Писательпе тĕл пулни кашнине савăнтарать.***

«Симĕс çулçă йывăç тымарĕнчен сĕткен илсе вăйланать, куçа савăнтарать. Поэт та çавăн пекех: халăх пурнăçĕн тутине чухламасан вăл нихăçан та вулакан чĕрине çул хываймасть». Анатолий Кибеч чăннипех те халăх çыравçи. Вăл халăх çинчен, ун валли çырать. Çак сăмахсен чăнлăхне «Пурнăç çулĕ такăр мар», «Хĕç тумалли хурçă», «Юратусăр телей çук», «Чĕлхесĕр пике», «Тамăкри ача сасси», «Чăваш пулма çăмăл мар», «Улăп таврăнни» тата ытти кĕнеке çирĕплетеççĕ, А.Кибеч пултарулăхне туллин уçса параççĕ.

Çитмĕл пиллĕкри Кибечĕн вăй-халĕ тапса тăрать. Литература анине «сухаланисĕр» пуçне вăл общество ĕçне те хастар хутшăнать. Пурнăçĕнчи тĕп тĕллеве – кашни çул пĕр кĕнеке кун çути кăтартмалла – тивĕçлĕ пурнăçлать.

Акă манăн алăра – 2013 çулхи «чун çимĕçĕ». «С мыслями наедине...» кĕнеке – писатель-философăн нумай çулхи сăнавĕ. Унта лайăххипе япăххи, ыррипе усалли, ĕмĕрхипе самантлăх пĕрлешсе шайлашнă. «Кĕскен каласан – пурнăç кĕнеки, – çырать Зоя Романова куçаруçă ум сăмахра. – Ку чун йăпатмăш вулав мар. Ăна шухăшлама пĕлекен çын валли çырнă. Çав вăхăтрах авторшăн çивĕчлĕх, иронилле пĕлтерĕш те ют мар. Вăл çамрăклăха тунсăхлăн аса илет... Тĕпрен илсен, Анатолий Кибеч этемре кăмăлсипетлĕхе вăратма тăрăшать, çамрăксене сывă пурнăç йĕркине хисеплеме чĕнет».



Кĕнекене маларах ытти кăларăмра /çав шутра «Хыпарта»/ чăвашла кун çути курнă тĕрленчĕксем кĕнĕ. Вĕсене вырăсла Зоя Романова куçарнă. «С мыслями наедине...» А.Кибеч пултарулăхĕнче вырăсла пичетленнĕ пĕрремĕш кĕнеке мар. Унччен маларах «Крещенские морозы» роман, «Думы о чувашском», «Свет истины, или Словарь прозрения чуваша» кĕнекесем /Н.Максимов куçарнă/ вулакан патне çитнĕччĕ.

■ Валентина БАГАДЕРОВА

*Çыхăнусем*

# Поэзи уявĕ

***Иртнĕ эрне кун Хусанта, Тутарстан çыравçисен пĕрлешĕвĕн çурчĕн Пысăк залĕнче, поэзи уявĕ пулчĕ. Çĕр аллă ытла çын хушшинче – çыравçăсемпе пĕрлех тутар вулаканĕсем, литературăпа ӳнер тĕпчевçисем.***

Уява Тутарстан Писательсен союзĕн председателĕ Рафис Курбан поэт уçрĕ, Рамис Аймет поэт ертсе пычĕ. Тĕл пулу сăлтавĕ – «Ильхам» издательствăра «Тутар поэзийĕн кăшăлĕ» ятлă чăвашла кĕнеке, хăйне майлă антологи, кун çути курни. Унта – тутар поэзийĕнче вун иккĕмĕш ĕмĕртен пуçласа паянхи кунччен ĕçленĕ тата ĕçлекен авторсен сăвви-поэми: Кул Гали, Мухаммадьяр, Акмулла, Дердменд, Мажит Тафури, Габдулла Тукай, Муса Джалиль, Хасан Туфан, Сибгат Хаким, вĕсен хыççăнхи ăрусем, пурĕ 123 автор. Вĕсене пурне те чăвашла Чăваш халăх поэчĕ Юрий Сементер куçарнă. Тутар сăвăçисемпе мĕнле çыхăну тытни, вĕсен пултарулăхĕпе чăваш вулаканне паллаштарас шухăш мĕнле çирĕпленсе пыни çинчен Юрий Семенович хăй каласа пачĕ, халăх унăн сăмахне кăмăллăн йышăнчĕ.

– Чăвашсем пире сума сăваççĕ, нумай куçараççĕ, – терĕ хăй сăмахĕнче Тутарстан халăх поэчĕ, Раççей Патшалăх премийĕн лауреачĕ Ренат Харис. – Нумай пулмасть Валери Туркай Габдулла Тукая куçарса кăларчĕ, кĕçех Муса Джалилĕн «Моабит тетрачĕсем» кун çути курĕç. Халĕ акă ку кăларăм пирĕн алла çитрĕ, чăваш ачисем Роберт Миннуллинăн «Пылак сапан туй» кĕнекине хапăлласа йышăнчĕç. Эппин, пирĕн те чăвашларан куçарас енĕпе çав шайрах тăрăшмалла.

Поэзи уявĕнче çавăн пекех Тутарстан Патшалăх Канашĕн Культура комиссийĕн ертӳçи, Тутар халăх поэчĕ Разиль Валеев, ТР Патшалăх премийĕн лауреачĕ Ркаиль Зайдулла, ЧНК вице-президенчĕ Константин Яковлев профессор, Евгений Турхан, Сергей Саманташ тата ытти çыравçă тухса калаçрĕç, куçару ĕçне пысăк хак пачĕç.

Туслăх концертне Аксу районĕнчи чăваш фольклор ансамблĕ, Тутарстан халăх артисчĕ Ильдар Маликов, чăваш юрăçи Надежда Заводскова тата ыттисем хутшăнчĕç.

■ Сергей ВАСИЛЬЕВ

# Северянинăн Крым пейзажĕсем

***ЧР тава тивĕçлĕ художникĕ Валерий Северянин çулла Харьковра, Запорожье облаçĕнче, Крымра пултарулăх командировкинче пулнăччĕ. Вăл унти хуласене çитсе курнă, паллă вырăнсемпе паллашнă, вĕсене ӳкерсе илнĕ.***

## *Çичĕ пейзаж*

Кĕркунне В.Северянин çуллахи ӳкерчĕксем тăрăх живопиç пейзажĕсем хатĕрлеме пуçларĕ. Çичĕ картинăна вĕçленĕ ĕнтĕ.

– Тăваттăшне Куçа курăнакан мĕлкесен айлăмне халалланă. Вырăнти халăх Лучистый поселокĕ çывăхĕнчи тĕлĕнтермĕш сăртсене çапла ят панă, – каласа кăтартрĕ Валерий Аркадьевич. – Çил тата атмосферăн ытти пулăмĕ хăйне евĕр чул кĕлеткесем туса хунă. Вĕсем мана кăсăклантарчĕç...

Художник тепĕр картинăна Ай-Петри тăвĕн тăрринче тунă ӳкерчĕксем тăрăх хатĕрленĕ. Крымăн Ялта таврашĕнчи кăнтăр çыранĕсем çийĕн çĕкленсе лараканскер питĕ мăнаçлă курăнать. Поэтсем унăн хитрелĕхне хăйсен хайлавĕсенче мухтаса юрланă.

## *Судак. Крепоç*

Икĕ картинăна Судакри XIV ĕмĕрти Генуя крепоçне халалланă. Вунă çул каялла ăнсăртран манăн аллăма вырăсла тухакан пăлхар хаçачĕ лекнĕччĕ. Унта çырнă тăрăх – крепоçе Азов тăрăхĕнчен килнĕ тĕрĕк чĕлхиллĕ пăлхарсем тума пуçланă. Генуясем вара вĕçленĕ.

Крепоç япăх мар упраннă. Художник каланă тăрăх – вырăнти халăх туристсене юрăкĕвĕпе, ытти хăйне евĕрлĕхпе илĕртет. Мана ту çинче ларакан крепоçе сăнлакан картинăсем уйрăмах килĕшрĕç. Чĕрĕ истори!

Автор Крым пейзажĕсемпе Чăваш Ен Художниксен союзĕ çуркунне йĕркелекен куравра паллаштарма палăртать.

■ Тимĕр АКТАШ

## Тем те пĕр

**Сербири Пирот хулинчи пĕр гимназирен вĕренсе тухнисем ĕмĕр манăçми бал ирттернĕ. Вĕсем унта хаклă йышши кĕпе-тумсăрах пыма килĕшсе татăлнă, перекетленĕ укçа-тенке вара... Шкул ачисем пĕтĕмпе 310 пин динар /120 пин тенке яхăн/ пухнă, ăна йывăр чирлĕ ачасем ӳстерекен 3 çемьене панă.**

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пĕлтерӳ
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

## *Саламлатпăр*



*Шăмăршă районĕнчи Карапай Шăмăршă ялĕнче пурăнакан Галина Витальевна КУЗЬМИНАНА юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр! Ăнăçу, çирĕп сывлăх, тулли телей, вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Çĕре çути пуç таятпăр сан умăнта, юратнă çыннăмăр. Малашне те пире савăнтарса пурăн.*

*Салампа Петровсем, Максимовсем.*

Администрация Аликовского района Чувашской Республики **"06" марта 2014 года в 10.00 часов** объявляет торги (открытый аукцион) по продаже земельных участков без обременения:

**Характеристика объекта права на заключение договоров аренды земельных участков:**

**Лот №1** - земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения с кадастровым номером 21:07:291901:403, расположенного по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, р-н Аликовский, с/пос. Тенеевское, для сельскохозяйственного производства, общей площадью 217885 кв.м. Начальная (стартовая аукционная) цена участка - 6300 (шесть тысяч триста) рублей 00 копеек.

**Лот №2** - земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения с кадастровым номером 21:07:231101:411, расположенного по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, р-н Аликовский, с/пос. Чувашско-Сорминское, для сельскохозяйственного производства, общей площадью 3723 кв.м. Начальная (стартовая аукционная) цена участка - 542 (пятьсот сорок два) рубля 00 копеек.

**Лот №3** - земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения с кадастровым номером 21:07:230501:100, расположенного по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, р-н Аликовский, с/пос. Чувашско-Сорминское, для сельскохозяйственного производства, общей площадью 4079 кв.м. Начальная (стартовая аукционная) цена участка - 590 (пятьсот девяносто) рублей 00 копеек.

**Лот №4** - земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения с кадастровым номером 21:07:251401:260, расположенного по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, р-н Аликовский, с/пос. Ефремкасинское, для сельскохозяйственного производства, общей площадью 694179 кв.м. Начальная (стартовая аукционная) цена участка - 19573 (девятнадцать тысяч пятьсот семьдесят три) рубля 00 копеек.

**Лот №5** - земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения с кадастровым номером 21:07:251401:259, расположенного по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, р-н Аликовский, с/пос. Ефремкасинское, для сельскохозяйственного производства, общей площадью 371054 кв.м. Начальная (стартовая аукционная) цена участка - 10468 (десять тысяч четыреста шестьдесят восемь) рублей 00 копеек.

**Лот №6** - земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения с кадастровым номером 21:07:050801:38, расположенного по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, р-н Аликовский, с/пос. Шумшевашское, для сельскохозяйственного производства, общей площадью 43314 кв.м. Начальная (стартовая аукционная) цена участка - 1390 (одна тысяча триста девяносто) рублей 00 копеек.

**Лот №7** - земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения с кадастровым номером 21:07:000000:2773, расположенного по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, р-н Аликовский, с/пос. Крымзарайкинское, для сельскохозяйственного производства, общей площадью 243610 кв.м. Начальная (стартовая аукционная) цена участка - 6867 (шесть тысяч восемьсот шестьдесят семь) рублей 00 копеек.

**Лот №8** - земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения с кадастровым номером 21:07:171701:116, расположенного по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, р-н Аликовский, с/пос. Крымзарайкинское, для сельскохозяйственного производства, общей площадью 124144 кв.м. Начальная (стартовая аукционная) цена участка - 3498 (три тысячи четыреста девяносто восемь) рублей 00 копеек.

**Характеристика объекта купли-продажи земельных участков**

**Лот №9** - земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения с кадастровым номером 21:07:171001:101, расположенного по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, р-н Аликовский, с/пос. Крымзарайкинское, для сельскохозяйственного производства, общей площадью 18223 кв.м. Начальная (стартовая аукционная) цена участка - 12540 (двенадцать тысяч пятьсот сорок) рублей 00 копеек.

**Лот №10** - земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения с кадастровым номером 21:07:200801:108, расположенного по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, р-н Аликовский, с/пос. Питишевское, для сельскохозяйственного производства, общей площадью 895342 кв.м. Начальная (стартовая аукционная) цена участка - 258664 (двести пятьдесят восемь тысяч шестьсот шестьдесят четыре) рубля 00 копеек.

**Сумма задатка** - 20% от начальной (стартовой аукционной) цены Участков.
**Шаг аукциона** - 5% от начальной (стартовой аукционной) цены Участков.
Заявки на участие в аукционе принимаются до 10.00 часов 28.02.2014 г.
За справками и информацией обращаться в отдел экономики, земельных и имущественных отношений администрации Аликовского района в каб. №48 и на сайте администрации района www.alikov.cap.ru (баннер - "Объявления").

Администрация Алатырского района 27 февраля 2014 года в 10.00 часов по московскому времени в помещении администрации Алатырского района по адресу: ЧР, г. Алатырь, ул. Горшенина, 7, кабинет № 6, проводит аукцион, открытый по составу участников и по форме подачи предложения о цене по продаже земельных участков, из земель с/хозяйственного назначения: Лот № 1 - земельный участок с К № 21:06:190101:180, площадью 47500 кв.м, для с/х производства, местоположение: ЧР, район Алатырский, Ахматовское сельское поселение, начальная цена 30606 руб., сумма задатка 6121 руб., шаг аукциона 5 %; Лот № 2 - земельный участок с К № 21:06:230101:86, площадью 10000 кв.м, для веления ЛПХ, местоположение: ЧР, район Алатырский, Атратское сельское поселение, начальная цена 21800 руб., сумма задатка 4360 руб., шаг аукциона 5 %; Лот № 3- земельный участок с К№ 21:06:220201:154, площадью 5500 кв.м, для с/х производства, местоположение: ЧР, район Алатырский, Сойгинское сельское поселение, начальная цена 13460 руб, сумма задатка 2692 руб., шаг аукциона 5%; Лот № 4 - земельный участок с К№ 21:06:190101:184,площадью 162 кв.м, для с/х производства, местоположение: ЧР, район Алатырский, Ахматовское сельское поселение, начальная цена 400 руб, сумма задатка 80 руб., шаг аукциона 5%; Лот № 5 - земельный участок с К № 21:06:190101:185, площадью 4650 кв.м, для веления ЛПХ, местоположение: ЧР, район Алатырский, Ахматовское сельское поселение, начальная цена 10140 руб., сумма задатка 2028 руб., шаг аукциона 5%. Заявки на участие в аукционе принимаются в каб. 6 администрации Алатырского района по адресу: ЧР, г. Алатырь, ул. Горшенина, 7 с 8.00 до 17.00 в рабочие дни. Победителем признается лицо, предложившее наиболее высокую цену по торгам, с которым в пятидневный срок заключается договор купли-продажи. По вопросам проведения аукциона, оформления заявок и перечисления задатков обращаться в каб. № 6 администрации Алатырского района или ознакомиться на сайте www.torgi.gov.ru .

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун" – 78353, "Çамрăксен хаçачĕ" – 54804, "Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515, "Сывлăх" – 11524, "Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор Н.Д.КОНОВАЛОВ

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта: hypar1@mail.ru hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă"** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7871. Заказ 268.